Кудряшов А.А.
Подписан: Кудряшов А.А.
DN: C=RU, O="МБОУ ""Таушкасинская СОШ им Г.Т. Прокопьева", CN=Кудряшов А.А., E=sh_rzivil5@rchuv.ru
Основание: Я являюсь автором этого документа
Местоположение: директор
Дата: 2024.04.08 16:54:12+03'00'
Foxit Reader Версия: 10.1.3

Приложение

к основной общеобразовательной программе

основного общего образования

Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение

«Таушкасинская средняя общеобразовательная школа имени полного

кавалера орденов Славы Германа Терентьевича Прокопьева»

Цивильского муниципального округа Чувашской Республики

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

## по чувашской литературе

**5-9**

**(классы)**

**2023-2024 уч. год**

**(сроки реализации)**

Рабочую программу разработал (-а): Александрова И. Л

Ф.И.О.

должность: учитель чувашской литературы

Таушкасы 2023

**Ăнлантарса пани**

Çак ĕç программи Тавăшкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулăн пĕтĕмĕшле вĕренӳ программин уйрăлми пайĕ пулса тăрать, шкулăн вĕренӳ планне пурнăçлать. Ĕç программине аяларах панă документсене тĕпе хурса йĕркеленĕ:

- стандарт**:** Федеральный компонент государственного стандарта общего образования. Ч.II. Среднее (полное) общее образование. Министерство образования и науки Российской Федерации. - М.2004.

- Государственные образовательные стандарты начального общего, основного общего, среднего (полного) общего образования в Чувашской Республике. Национально-региональный компонент.- Чебоксары, 2007.

- Концепция федеральных государственных образовательных стандартов общего образования: проект / Рос. акад. образования; под ред.А.М.Кондакова, А.А.Кузнецова. – М.: Просвещение, 2008.- 39с.- (Стандарты второго поколения).

- Фундаментальное ядро содержания общего образования: проект / под.ред. В.В.Козлова, А.М.Кондакова. – М.: Просвещение, 2009. -48с. – (Стандарты второго поколения).

**- программа:** Тăван литература. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем валли /Чăваш Республики Вĕренӳ тата çамрăксен политикин министерстви; Н.Г.Иванова: Е.А.Майков хатĕрленĕ. - Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви: 2015.

Çак программăпа 7 класра пĕр вĕренекен-ЗПР.

Чăваш литератури программи: чăваш шкулĕн 5-11 класĕсем. З.С.Антонова, Н.Г.Иванова, В.П.Никитин (Станьял).- Шупашкар, 2003.

**- вĕренӳ пособийĕ:** 1.Тăван литература вĕренӳпе вулав кĕнеки.5-мĕш класс валли/ Н.Г.Ивановăпа П.Н.Метин çырса-пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2013

2. Тăван литература вĕренӳпе вулав кĕнеки.6-мĕш класс валли/ Н.Г.Ивановăпа З.С.Антонова çырса-пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2009.

3. .Тăван литература вĕренӳпе вулав кĕнеки.7-мĕш класс валли/ З.С.Антоновăпа П.Н. Метин çырса-пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2010.

4. Чăваш сăмахлăхĕ: 8-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / В.П.Станьял хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2011. – 318с.

5. Чăваш литератури: Вăтам шкулăн 9-мĕш класĕ валли / В.П.Никитин (Станьял) пухса-çырса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2014. – 335с.

.

2. Килти вулав кĕнеки. 5-мĕш класс валли/ Н.Г.Иванова çырса-пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Ча̀ваш кĕнеке изд-ви. 2014.

3. Килти вулав кĕнеки. 6-мĕш класс валли/ Г.Г.Ивановпа Е.Г.Крышкина çырса-пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Ча̀ваш кĕнеке изд-ви. 2007.

4. Килти вулав кĕнеки. 7-мĕш класс валли/ Г.Г.Иванова çырса-пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Ча̀ваш кĕнеке изд-ви. 2008.

## Вĕренӳ предметне пĕтĕмĕшле хаклани

Чăваш шкулĕшĕн тăван литература (чăваш литератури) вĕрентӳ предмечĕ кăна шутланмасть - вăл сапăрлăх (воспитани) мелĕ те. Шкулти литература вăл – вĕренекенсенче патриотла-гражданлăхпа (элтешлĕх) илемлĕх туйăмĕсене йĕркелекен ӳнер. Ăна ни пĕлӳ мăскалĕпе, ни хăнăхусен кушелĕпе виçме пулмасть. Çна вĕренсе тухнă ачасен çынлăх пахалăхĕсемпе кăна хаклама пулать тет В.П. Станьял. «Тăван литература» предмет урокĕсем – тăван халăхĕн илем урлă куранакан ăс-хакăлне, чун хавалне: аптраманлăхне ăша хывмалли ĕç мелĕ. Тăнпа чун урлă кĕнĕ ĕненӳ çеç шанчăклă сапăрлăх пулать. Çакăнта палăрать те ĕнтĕ тăван сăмахлăхĕн хăвачĕпе вăрттăнлăх. Тăван литературăна вĕрентес ĕçĕн тивĕçĕ вăл - предмет лартнă тĕллевсене пурнăçа кĕртесси. Вĕсен шутĕнче илемлĕ хайлава вуласа ăнланма, ăс-хакăл культуринчи унăн вырăнне курма, сăмах ӳнерĕн тĕслĕхĕпе хăй тĕллĕн ĕçлеме пултаракан вулакана хатĕрлесси.

Этеме пархатарлă туйăмсем кӳрекен çăл куç вăл - ӳнер. Унăн уйрăлми пĕр пайĕ - литература. Литература - сăмах ăсталăхĕ. Шкулта илемлĕ литература вĕрентессин чи тĕп тĕллевĕсенчен пĕри вăл ырăпа усал, йĕркелĕх, çынлăх хаклавĕсем, çут çанталăка, чĕрĕ чуна юратни, çыннăн чун-чĕре пуянлăхĕ, сăпайлăхĕ, ырăлăхпа сапăрлăх ăнлавсене ăнкарасси. Илемлĕ литература хускатнă çак ыйтусем тĕрлĕ вăхăтра, тĕрлĕ социумра, халăх хушшинче тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Çак ыйтусем вара яланах гуманитари предмечĕсем çине тиеннĕ. Шкул вĕрентĕвĕн тытăмĕнче çак предмет ачана пур енлĕн аталантарма пулăшать.

Тăван литературăна вĕреннĕ майăн шкул ачисем пурнăçри пулăмсене хак пама, тĕрлĕ лару-тăруран çынлăха çухатмасăр тухма хăнăхаççĕ.

Литература (вырăс, чăваш, тĕнче) тавра курăмпа тĕнче курăма никĕслеме пулăшать, чи тĕпри вара - хăйĕн харкамлăхне çирĕплетме, хăйĕн харкамлăхне туйма пулăшасси. Ӳссе çитĕнекен ăрăвăн кăмăл-сипетне, хăнăхăвне, тыткаларăшне йĕркелеме ытларах литература предмечĕ пулăшать. Çавăнпа та тăван литературăна шкулта вĕрентнин пĕлтерĕшне илеме курма-туйма хăнăхнипе анчах çыхăнтармалла мар. Чи сумлă (пархатарлă) функцисенчен тĕпри вăл - çын тата этем сăн-сăпатне туллин, пур енлĕн аталантарассипе çыхăннă. Тăван халăхăмăрăн, унăн аваллăхĕпе чĕлхине, культурине юратма-хисеплеме вĕрентесси пулмалла.

Наци шкулĕ валли хатĕрленĕ тăван литературăн тĕслĕх программи - предмета шкул ачисен мĕн чухлĕ пĕлмеллине палăртакан документ. Вĕренӳ планĕн кирек хăш варианчĕпе вĕренекенсен те пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп е вăтам шкулта, пĕлӳ шайĕ программăра кăтартнине тивĕçтермелле. Тăван литературăпа хатĕрленĕ тĕслĕх программăра вĕрентĕвĕн кашни тапхăрнĕче мĕнле ĕç тумаллине кăтартнă. Унта халăх сăмахлăхĕпе литература хайлавĕсене вĕренесси тĕп вырăн йышăнать. Программăра халăх сăмахлăхĕпе литературăна шкулта ӳнерĕн пĕр тĕсĕ тесе вĕрентме сĕннине тĕпе хунă.

«Тăван литература» предметпа Вĕренӳ программине литература аталанăвĕн авалхи, вăтам, хальхи çитĕнĕвĕсене шута илсе çыхăнуллă сыпăнтарса хатĕрленĕ.

Тĕслĕх программăна кĕртнĕ вĕренӳ материалĕн тĕллевĕ – ачасене тăван литературăн аталану çул-йĕрне, уйрăмлăхĕсене ăнланма, предметпа çирĕп пĕлӳ илме пулăшасси.

«Тăван литература» предмета вĕренессине темăсем тăрăх (5-7 классем) тата историпе хронологи принципне (8-9 классем) пăхăнса йĕркеленĕ. Тăван литературăн тĕслĕх программине (5-9 классем валли) ачасен çулне кура **икĕ тапхăрлă тунă – 5-7 тата 8-9 классем**. Пĕрремĕш тапхăрта – 5-7 классем, культурăн традициллĕ контекстне

халăх педагогики никĕсĕ çинче йĕркеленĕ тематика принципĕ тĕпре. Кунта чăваш халăх сăмахлăхĕпе литературин пуçламăш пĕлĕвне памалла. Иккĕмĕш тапхăрта – 8-9 классем, тăван литературăн тапхăрлă вĕрентĕвне халăх кун-çулне, культура аталанăвне вăхăтпа талккăш сарăмĕнче пăхмалла. Вăталăх пусăмра (8-9-мĕш классем) вĕренме хайлавсене литература историйĕн тапхăрĕсемпе мар, унăн пахалăхне шута илсе суйланă. Хальхи вăхăтра 9 класран вĕренсе тухакансем тĕп пĕлӳ илеççĕ.

### «Тăван (чăваш) литература» предмета вĕрентессин тĕллевĕсем

Тăван литературăна вĕренни лартнă тĕллевсене пурнăçа кĕртме пулăшмалла. Тĕллевсем пĕлӳ, ăслай, хăнăху шайĕнче пулаççĕ. Чăваш литератури предмечĕн тĕп тĕллевĕ вăл - шкул ачин кăмăл-сипетне йĕркелесе аталантарасси. Тăван литературăна шкулта вĕрентни чăваш ачисемпе çамрăкĕсен наци туйăмĕпе мăнаçлăхне аталантарма пулăшать, çав туйăма килес ăрусем патне çитерме çын чунĕнче никĕс хывать. Чăваш литератури шкул ачин чăвашлăх туйăмне аталантарма пулăшать. Шкулти вĕренӳ предмечĕ пулнă май вăл ачасене ĕç-пуçа пурнăçри пулăмсене чăвашла курма, вĕсем пирки чăвашла шухăшлама, вĕсене чăвашла хаклама вĕрентет.

Кирек мĕнле ĕçĕн те хăйĕн пĕтĕмĕшле тĕллевĕ пур. Çав шутра вĕрентӳ ĕçĕн те. Кашни вĕрентекеншĕн вĕрентӳ тĕллевĕсем уçăмлă пулмалла. Тĕллевсене палăртнă май çакна шута илмелле: 1) пурнăç ыйтнине тивĕçтересси; 2) тăван литератури историйĕн аталанăвне тĕпе хурасси; 3) педагогикăпа психологи, меслетлĕх ăслăлăхĕсен кăтартăвĕсене пурнăçласси; 4) тăван литературине чĕлхе вĕрентĕвĕпе, чĕлхе культурипе, историпе, этикăпа, эстетикăпа, вырăс литературипе, тĕнчелитературипе, тĕрлĕ ӳнерсемпе, психологипе çыхăнтарса вĕрентни. Литература тĕнчене илемлĕх мелĕсем çине таянса çутатать, этемĕн пурнăçне литература геройĕсем е автор урлă кăтартса парать. Чун-чĕрене пăлхатни шкул ачин илем туйăмне аталанма пулăшать. Чăваш литературине вĕрентессин тĕллевĕсене икĕ ушкăна уйăрнă, 1) тăван литературине вĕрентессипе çыхăннă ятарлă тĕллевсем; 2) ытти предметсене вĕрентессипе çыхăннă пĕтĕмĕшле тĕллевсем. Вĕсем çаксем.

1. Ятарлă тĕллевсем,

- чăваш халăх сăмахлăхĕпе çыруллă сăмахлăх хайлавĕсен чи паха тĕслĕхĕсемпе паллаштарни;
- ачасене ӳнерсен тата сăмах ӳнерĕн пулăмĕсене тĕрĕс ăнланма, ăша хывма вĕрентни;
- шкул ачин тавра курăмĕпе тĕнче курăмне аталантарма пулăшни, ачасен харкамлăх ăнне халăх педагогикипе эстетики, кăмăл-сипечĕпе философийĕ урлă çирĕплетме, хăйĕн харкамлăхне туйма пулăшни;
- шкул ачин кăмăл-сипет тата культура никĕсне, чи малтан чăвашсен традициллĕ тĕнче ăнланăвне пур енлĕн аталантарни;
- вулавпа вĕренӳ урлă илемлĕх ăнкарăвне, тĕрĕслĕх туйăмне тарăнлатса пыни;
- илемлĕ сăнарпа сăнарлăх пĕлĕвне туйма, хаклама хăнăхни, çыхăнуллă шухăшлава тарăнлатса пыни.

2. Пĕтĕмĕшле (сапăрлăх) тĕллевĕсем:

- ĕç хăнăхăвĕсене йĕркелесси, вĕренекенсене ытти халăх ă н литературипе паллаштарни, справочниксемпе, энциклопедисемпе усă курма вĕрентни;
- пуплев-хутшăну культурине аталантарни;
- ачасен шухăшлавĕпе пултарулăхне аталантарни;
- общество пурнăçĕн пулăмĕсене, кулленхи пурнăç тупсăмĕпе çыхăннă проблемăсене тарăннăн ăнланма пулăшни;
- тĕрлĕ предмет çыхăнăвĕсене пĕтĕмлетме пĕлни;
- чăваш халăх сăмахлăхĕпе çырулла сăмахлăх хайлавĕсен чи паха тĕслĕхĕсемпе паллашни;
- ӳнерсен тата сăмах ӳнерĕн пулăмĕсене тĕрĕс ăнланма, ăша хывма вĕренни; вулавпа вĕренӳ урлă илемлĕх ăнкарăвне, тĕрĕслĕх туйăмне тарăнлатса пыни.

**«Тăван (чăваш) литература» предметăн базис вĕренӳ планĕнчи вырăнĕ**

Вĕренӳ учрежденийĕнче тăван литература сехет шучĕпе базис планне пăхăнса тăрать. Çирĕплетнĕ вĕренӳ планĕ 5-мĕш класра тăван литература вĕрентме 70 сехет (эрнере 2 сехет), 6-мĕш класра – 105 сехет (эрнере 3 сехет), 7-мĕш класра – 70 сехет (эрнере 2 сехет), 8-мĕш класра-68 сехет(эрнере 2 сехет), 9-мĕш класра – 51 сехет (эрнере 1.5) уйăрнă.

**Вĕренӳ компетенцийĕсем**

Вĕренӳ тĕллевĕсем ачасен тăван литература пĕлĕвĕн (пĕлӳ, пултару, хăнăху) компетенцийĕпе тачă çыхăнура тăраççĕ, урăхла каласан, вĕсем ачасен тăван литературăпа мĕн-мĕн пĕлмеллине палăртаççĕ. Тăван (чăваш) литературăна 5-9-мĕш классенче вĕреннĕ май йĕркелемелли компетенцисем пурĕ улттă. Литература вĕрентĕвĕн тĕп никĕсĕ вăл - **вулав компетенцийĕ (ăсталăхĕ).** Шкул ачин вулавне ӳсĕмрен ӳсĕме кунран-кун йĕркелени, тĕрĕслени, вĕренӳре вулав культури йĕркеленни.

Вулав культурин виçĕ шайĕ, вулакан ăнкарулăхĕ (хайлав сăнарлăхне (поэтикине) пĕлни, ăна хакласа тишкерме пултарни), туйăмĕ (хайлав тĕп шухăшĕсене, илемлĕхне кăмăл-туйăмпа йышăнма пултарни), пултарулăхĕ (вуласа тухнă хыççăн хăйĕн шухăшĕсене каласа, çырса пама пĕлни). Илемлĕ литература, ăслăлăхпа политика, публицистикăпа критика хайлавĕсене тĕрĕс, çăмăл, уçăмлă вулама пĕлни. Класри тишкерӳ тата килте вуласа класра сӳтсе явни е ирĕклĕ вулав. Ирĕклĕ вулав вăл лайăх вĕренекен е вулама юратакан ачасем харкам тĕллĕн вулани. Ку хайлавсем малтан вĕреннисемпе тачă çыхăнса тăраççĕ.

**Культуроведени компетенцийĕ** вара шкул ачин тĕнче туйăмĕпе тĕнче курăмне никĕслеме пулăшни, ачасен харкамлăхне халăх педагогикипе эстетики, кăмăл-сипечĕпе философийĕ урлă çирĕплетни, хăйĕн харкамлăхне туйма пулăшни, ăна аталантарни; тăван литература наци культурине палăртакан ӳнер пулнине ăнланни; тăван литературăра халăхăн аваллăхĕ , шухăшлавĕпе тĕнче курăмĕ, йăли-йĕрки çырăнса юлнине курни; шкул ачин кăмăл-сипет тата культура никĕсне, чи малтан чăвашсен традициллĕ тĕнче ăнланăвне пур енлĕн аталантарни, тĕнчери пур халăхсен культурипе çыхăнтармаллине ăша хывни.

Халăх педагогикипе тăван халăхăн кăмăл-сипет пуянлăхĕ урлă ĕмĕрсем витĕр сăнланса юлнă пурлăх тата ăс-хакăл культурине ача патне туллин çитерни, пĕр пĕтĕмĕшле анлă тавра курăмлă тавçăруллă çын пулма пулăшни, шкулта вĕренсе çитĕнекен ачасен ăс-тăнне çын пурнăçĕн тĕп (базовый) культурин пуянлăхне ăша хывтарни.

Çыравçă пурнăçĕпе пултарулăхĕ урлă вăл пурăннă вăхăта хак пама пултарни (хăш саманара, камсемпе хутшăнса, мĕншĕн кĕрешсе ӳснине, тĕнче курăмĕ мĕнле витĕмпе йĕркеленнине, унăн пултарулăхĕ вăл пурăннă вăхăтпа çыхăнса тăнине палăртма пĕлни). Хайне культурăпа истори процесĕн обьекчĕ (пайĕ, элеменчĕ) пек туйни тĕпре пулмалла.

**Хутшăну (коммуникаци) компетенцийĕ** калаçупа (пуплевпе) çыру ăсталăхĕн пур енĕпе те (тăнлав, калаçу, вулав, çыру) усă курма вĕренмеллине пĕлтерет. Шухăша çыхăнуллă çырса е сăмах вĕççĕн каласа пани, пĕтĕмлетни, харпăр хăй шухăшне татăклăн та уççăн пĕлтерни, тĕслĕхсемпе çирĕплетни, юлташсене тимлĕн итлеме хăнăхни; вуланине тĕплĕн, туллин, илемлĕ текстăн стилĕпе жанрĕн тĕп уйрăмлăхсене çухатмасăр, кĕскен тата суйлавлăн каласа пани; çыхăннуллă шухăшлава тарăнлатса пыни; вуланă илемлĕ текста, спектакльпе фильма, телефильма хак пани.

**Кăмăл – сипет компетенцийĕнче** вĕренӳпе вулав тата тĕпчев урлă халăхăн ĕмĕрхи илемлĕх ăнкарăвне ăша хывни.

Чăваш литератури - ăс-хакăл палăкĕ, ăс-хакăл культурин чи пуян та пĕлтерĕшлĕ пайĕ пулнине пĕлни. Илемлĕ литература илемлĕхе туйма çеç мар, ачасен ăс-хакăл, кăмăл-

сипет пуянлăхĕн туйăмĕсене çынлăх шайне çĕклеме пулăшни, илемлĕ хайлавсем этем чунĕнче çынлăх туйăмĕсене хускатма тăрăшни. Илемлĕ литература хайлавĕсенчи сăнарсен тупсăмне тупма хăнăхни, хăйĕн чун хавалне, чĕре сисĕмне аталантарани, шкул ачи илемлĕ литературăри хайлав геройĕсемпе хăйне танлаштарса пурнăç çулĕпе утма хăнăхни.

**Информаци компетенцийĕ**. Пурнăçра кашни утăмрах тĕл пулакан информаци обьекчĕсем (телевизор, магнитофон, компьютор, кĕсье телефонĕ, планшет, плеер, электрон кĕнеке, принтер, модем, копи аппарачĕ) информаци технологийĕсем (ауди тат сăнÿкерÿ, электрон почти, хаçат-журнал, Интернет) ачасене хăйсем тĕллĕн ĕçлеме, шырама, тишкерме, ăнланса хак пама, тивĕçлĕ информацие пĕтĕмлетсе евĕрлеме, май пур пек пĕлÿсемпе тата хăнăхусемпе усă курма май параççĕ. Ку компетенци ытти предметсене вĕреннĕ чухне тен мĕн пур тавралăхри ĕç-пулăма ăнланса илсе ăша хывмалли хăнăху шутланать.

## Вĕренÿ предмечĕ

**5-7 классенчи вĕренÿ предмечĕ.** 5 класра тăван литература хăйне уйрăм предмет шутланать. Пуçламăш классемпе танлаштарсан вĕренекенсен вулав ăсталăхĕ ÿсет. Илемлĕ текстсем пысăкланса, вĕсен тематики анлăланса пынăçемĕн вĕренекенсенче тăван литературăпа, культурăпа, чăваш халăх уявĕсемпе, йăли-йĕркипе ытларах паллаштарас туртăм вăйланать. 5-7 класс ачисем валли вĕрентме тивĕçлĕ çивĕч сюжетлă, чуна пырса тивекен, шухăшлава, тавçăрулăха аталантарма пулăшакан, мĕн вуланипе хавхаланса, хăпартланса, пысăк туйăмпа эмоцилĕх çуратакан хайлавсене суйласа илме тăрăшнă.

Текст тата вулавçă лару-тăрăвне уçăмлатма, вĕренÿ пултарулăхне кăсăклатма, сапăрлăх (воспитани) ыйтăвĕсемпе ĕçлеме Раççей Федерацийĕн вĕренÿ тата наука министерстви 2013 çулхи утă уйăхĕн 12-мĕшĕнче кăларнă 09-879 № хушăвĕнчи кăтартусем программра никĕспе тăраççĕ. **Тематика йĕркине пăхăнса** гражданла-патриотлăхпа, кăмăл-сипетпе, ĕçпе пултарулăхпа, ăс-хакăлпа, сывлăхпа, социаллă интернационаллăхпа, культурăпа эстетикăллахпа (илем туйăмĕ), правăпа, пуплевпе хутшăну культурипе, çут çанталăкпа тата ăна сыхлассипе (экологи) çыхăннă çивĕч ыйтусене хускатакан хайлавсене вуласа тишкерме палăртнă.

Паянхи чăваш шкулĕн тĕп тĕллевĕ вăл – наци ачисемпе вĕсен тăван чĕлхин хушшинчи пĕрлĕхе йĕркелесси. Çакна воспитани тĕллевне пĕлÿ тĕллевĕнчен маларах хурсан çеç пурнăçлама пулать.

Халăх педагогикипе этемлĕх ыйтăвĕсене ăша хывма пулăшакан темăсен ушкăнĕсем литературăн пуçламăш пĕлĕвне йĕркелеме питĕ пулăшаççĕ. Вĕренÿпе воспитани ĕçĕнче чăваш енĕн педагогикипе паянхи педагогика, психологи, меслетлĕхпе технологи ăслăлăхĕн мелĕсемпе пĕрлĕхлĕ, çыхăнуллă усă курмалла.

**8-9-мĕш классенчи вĕренÿ предмечĕ.** Шкулсенче илемлĕ литературăна вĕрентес ĕç дидактикăн (вĕренÿ теорийĕн) пĕтĕмĕшле теорийĕсене тивĕçтермелле. Вĕрентĕвĕн тĕп тĕллевĕсем – ачасене пĕлÿ, хăнăху парасси, шухăшлавĕпе ĕçлес пултарулăхне аталантарасси. Çапах та литература историйĕн, теорийĕн кăткăс ыйтăвĕсем шкул ĕçĕнче тĕп вырăнта тăма пултараймаççĕ. Вĕсем хайлавсене ăнланма, уçса пама тата сăмах ÿнерĕн тĕнчине хак пама кирлĕ.

8-9- мĕш классенчи темăсенчен пĕрисем литература ÿсĕмĕн уйрăм тапхăрĕсене пĕтĕмĕшле сăнласа параççĕ, теприсем уйрăм çыравçă пултарулăхне тĕпчесе-тишкерсе вĕренмелли темăсем шутланаççĕ.

Тĕп вырăнта литература аталанăвĕнче палăрнă çыравçăсен чи паллăрах хайлавсем.

8-мĕш класра темăна тата хронологие, 9-мĕш класра жанра тата хронологипе историе (халăхăн, обществăн пурнăçне) тĕпе хурса вĕрентмелле. Çак пусăмри ачасене историри вăл е ку пулăм, ĕç-пуçпирки шушăшлаттармалла, ытларах хайлавсенче сăнланнă вăхăтпа событии тата геройсем çинчен калаçмалла. Çыравçăсен пурнăçĕпе пултарулăхĕн паллăрах енĕсем исторílле калаçусем çинче никĕсленмелле. Çакна тума автор тата вулавçă çыхăну мелне илмелле. Автор хайлавсенче çырса панă вăхăта мĕнле сăнланине,

хакланине(автор позицине) ачасен литературăри концепт хăнăхăвĕн (теорири тата литература историйĕнчи аталану çул-йĕрĕ) тытăмне май парать.

## Мĕн вуламалла

Тĕп вырăнта халăх сăмахлăхĕнчи тата тăван литературăри илемлĕ хайлавсем кĕнĕ. Вулав валли халăх сăмахлăхĕнчи тата çыруллă литературăри илемлĕ хайлавсене суйласа илнĕ. Вĕсем литературăн тĕрлĕ жанăрлă хайлавĕсем. Ача-пăча литературин «ылтăн фондĕнчи» текстсем. Вĕсем урлă этемлĕхĕн чи аслă пуянлăхĕсене шкул ачин чун-чĕрине хывса хăварма тăрăшмалла. Çак принципсем халăх несĕпĕн, моралĕн, чысĕн тĕп енĕсем урлă пулса пымалла. Халăх педагогикипе тăван халăхăн кăмăл-сипет пуянлăхĕ урлă ĕмĕрсем витĕр сăнланса юлнă пурлăх тата ăс-хакăл культурине ача патне туллин çитересси, пĕр пĕтĕмĕшле анлă тавра курăмлă тавçăруллă çын пулма пулăшасси тĕп вырăнта пулмалла. Шкулта вĕренсе çитĕнекен ачасен ăс-тăнне çын пурнăçĕн тĕп культурин мулĕпе пуянлатмалла. Шкул вĕренсе тухакан ачан сăн-сăпатне (портретне) калăплакан пахалăхсем çаксем шутланаççĕ: пурнăçра харпăр хăй вырăнне тупни, çемье (кил-йыш) пурнăçĕн культури, экономика ĕçлев культури, ăс-тăн, ĕрет-несĕл, ăс-хакăл культури, хутшăну культури, çут çанталăк пуянлăхне сыхлас культура, илемлĕх культури, сывлăха упрас культура. Ку пусăмри шкул ачи фантастикăлла, приключениллĕ, детективлă литературăна питĕ юратать. Чăваш ача-пăча литературинче çак жанрсем питех аталанайман. Çавăнпа ятлă-сумлă çыравçăсемпе юнашар çамрăк авторсен хайлавĕсем те тивĕçлĕ вырăн тупмалла. Ачасем хăйсен тантăшĕсем çинчен çырнисене, паттăрсемпе çĕнтерӳçĕсене, туслăхпа юлташлăха халалланă хайлавсене юратаççĕ. Литература геройĕсене вара паттăрла ĕçсемшĕн, ырă кăмăллăхĕпе сăпайлăхĕшĕн, ыттисене ăнланма пĕлнишĕн килĕштереççĕ. 5-9 класс ачисен чун-чĕрепе, кăмăл-сипет ыйтăвĕсем, геройсен хутшăнăвĕсемпе хăтланкаларăшĕсем, тулашри ĕç-пуç кăсăклантараççĕ. Çакăн пек темăллă хайлавсем федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕ кăларса тăратнă тĕллевсене пурнăçлама май параççĕ. Çивĕч сюжетлă, чуна пырса тивекен, шухăшлава, тавçăрулăха аталантарма пулăшакан, мĕн вуланипе хавхаланса, хăпартланса, пысăк туйăмпа эмоцилĕх çуратакан хайлавсем вулама юратаççĕ. Ку тапхăрта тăван халăхăн иртнĕ кун-çулне, унăн культури аталаннине вĕренекенсен ăс-пуçне, чун-чĕрине хывасси пысăк пĕлтерĕшлĕ.

## Литература теорийĕн ыйтăвĕсем

**5-7-мĕш класс** ачисене текста (илемлĕ хайлава) тарăннăн тишкернĕ чухне кирлĕ пулакан ăнлавсемпе терминсене вĕрентни кирлех. Ку пусăмри ачасем хайлавсенче çыравçă ытларах чăн пурнăçри фактсене мар, хăй шухăшласа кăларнă геройсемпе пулăмсене пурнăçри пек сăнласа кăтартнине ăнланма тивĕç. Ача илемлĕ текстпа вулавçă хушшинчи çыхăнăва тĕпе хурса геройсене хак пама, хакласа çырма, хăйĕн шухăшне палăртма пултармалла. Çак çыхăну ситуацине уçакан ăнлавсене тĕплĕнрех, туллирех памалла. Вĕсем илемлĕ хайлав содержанийĕпе тата тытăмĕпе çыхăннă ăнлавсем тавра ушкăнланмалла:

- илемлĕ хайлав темипе тата тĕп шухăшĕпе;
- литература геройĕ, сăнар, персонаж пĕлтерĕшне ăнланни, сăнарсене уйăммăн сăнлани (сăн-сăпачĕ, ĕç-хĕлĕ, шухăшĕ, кăмăлĕ, тыткаларăшĕ, пуплевĕ), ушкăнласа танлаштарма (автор харктеристики);
- хайлав тытăмĕ: ĕç пуçламăшĕ, ĕç аталанăвĕ, ĕç хĕрсе çитнĕ вăхăт, ĕç вĕçĕ;
- сюжет (событисем, ĕçсемпе пулăмсен çыхăнăвĕ, персонажсем хушшинчи хирĕçӳ-тытăçу (конфликт), пейзаж, интерьер);
- прозăллă тата сăвăллă пуплев (çыравçă пурнăçри ӳкерчĕксене сăнлани): тропсем (эпитет, танлаштару, сăпатлантару, метафора), пуплев çаврăмĕсем (фигурисем): антитеза, паралельлĕх, хутлам, вăйлату, аллитераци, ассонанс;

- сăвă тытăмĕ (миçе çавраран тата йĕркерен тăни), сăвă çемми (ритмĕ), састаш (рифма), лирика геройĕ.

**8-9-мĕш классенче** ачасем илемлĕ хайлавсене сӳтсе явма юратаççĕ. Тишкерĕве теори пĕлĕвĕсĕр иртterme май çӳк. Вулавçă автор çыхăну мелĕпе çын (герой) сăнарĕ историн пĕр-пĕр паллă тапхăрĕпе, саманапа, авторăн тĕнчекурăмĕпе тата ун чухнехи пуç пулса тăнă литература сулăмĕсемпе, пултарулăх меслечĕсемпе çыхăнса уçăмланать Çак историлле ăнлав ачасене илемлĕ хайлавра пурнăç чăнлăхĕ мĕнле уçăлнине, сăнарсен типлăхĕ уçăмланнине, çынлăха мала хунине ăнланса илме пулăшмалла. Çапла вара, 5-7 классенче вĕреннĕ теорипе вĕреннĕ пĕлӳ çыхăнуллă йĕркене вырнаçмалла, литература речĕсен, тĕсĕсен, жанрсен тытăмĕ ачасен ăсĕнче системăланса çитмелле:

- хайлавсен сăнарлă тытăмĕнче наци хăй евĕрлĕхне палăртма хăнăхни;
- литературăн ретпе жанр уйрăмлăхĕсене сăнаса пĕтĕмлетни;
- пурнăç чăнлăхĕпе автор хăй ăсласа тунă сăнарсемпе пулăмсем хушшичи шайлашăва асăрхани, хайлаври авторăн кăмăлĕпе шухăш-туйăмĕ мĕнлерех палăрнине сăнани;
- хайлавра пур енчен туллин тишкерме, темипе проблемине, тытăмĕпе сăнарĕсене, кофликчĕпе сюжетне ăнланма, лирикăллă героя уçса пама вĕренни;
- çыравçă пурнăçĕ урлă вăл пурăннă вăхăта хак пама пултарни (хăш саманара, камсемпе хутшăнса, мĕншĕн кĕрешсе ӳснине, тĕнче курăмĕ мĕнле витĕмпе йĕркеленнине, унăн пултарулăхĕ вăл пурăннă вăхăтпа çыхăнса тăнине палăртма пĕлмелле).

### Вулав тата литература пултарулăхне аталантарасси
### (пуплевri тата çырури пуплев ăсталăхĕ)

**5-7-мĕш класс.** Пуплев ĕçĕ-хĕлĕн тĕп тĕллевĕсем - ачасен калаçăвне, тăнланине, вулавне, çырăвне аталантарасси. Калаçас, тăнласа ăнкарас, ăнланса вулас енсен аталанăвĕ ачасен шухăша çырура палăртас ĕçлев аталанăвĕнчен маларах пырать. Çак ĕçсене куллен аталантарасси тĕп тĕллев пулса тăмалла. Калаçăва тикĕс, уçăмлă, таса тума хăнăхтармалла. Сăмах вĕççĕн тĕрлĕ темăпа калав, сăнлав, ăслав мелĕпе каласа пама хăнăхтарасси, вулакан хайлавсен сыпăкĕсенче çав уйрăмлăхсене тупса палăртма хăнăхтарасси тĕп вырăнта пулмалла.

Илемлĕ хайлавсене вуласа тухнă хыççăн каласа е çырса панă май ачасен çакăн пек пĕлӳ́-ăслай хăнăхусем тума пултармалла:

- текст тăрăх калаçу чĕлхи, илемлĕ чĕлхе, официаллă чĕлхе уйрăмлăхĕсене палăртма пултарни;

- сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнланма пĕлнине лайăхлатасси, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхни;

- сасăсене, вĕсен майлашăвĕсене (интонаци, тембр, пауза, пусăм) тĕрĕс калас, вулас, палăртас хăнăхусене çирĕплетсе анлăлатни;

- вуланине тĕплĕн, туллин, илемлĕ текстăн стилĕпе жанрĕн тĕп уйрăмлăхсене çухатмасăр, кĕскен тата суйлавлăн каласа пани;

- вуланă илемлĕ текста, спектакльпе фильма, телефильма хак пани, çак ĕçĕн тĕрлĕ мелĕсен формисем çаксем – пĕр-пĕр ĕç çинчен (класра е шкулта пулса иртни, экскурсие е пулла кайса килни, каникула епле ирттерни т.ыт.те) калавласа (повествование) çырса (ӳ́керсе, презентацилесе, кăларса) пама хăнăхни; пĕр-пĕр героя, персонажа, çынна, çут çанталăк пулăмне, чĕр чуна, вуланă хайлав валли ӳ́кернĕ иллюстрацисем, ӳ́нер картинисем, слайдсем, фотосем, плакатсем тăрăх сăнлав изложенийĕсемпе сочиненисем çырни; пулса иртнĕ ĕçе-хĕле, вуланă халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене, илемлĕ хайлава литература теорийĕн пĕлĕвĕсемпе усă курса хакламалли ăслава аталантарни;

- юптарăва, юмаха, калава инсценировка çырас никĕсе (диалог, монолог, полилог, режиссер ремарки ăнлавсем) аталантарни, пысăк мар текст тăрăх киносценарий, инсценировка çырни , видеоклип, видеорорлик ӳ́керни, презентаци туни;

- илемлӗ хайлавӑн ансат, кӑткӑс, цитатӑллӑ планӗсене сӑмахпа каласа тата ҫырса туни;

- шухӑша ҫыхӑнуллӑ ҫырса е сӑмах вӗҫҫӗн каласа пама, пӗтӗмлетме, харпӑр хӑй шухӑшне татӑклӑн та уҫҫӑн пӗлтерме, тӗслӗхсемпе ҫирӗплетме, юлташсене тимлӗн итлеме хӑнӑхни;

- сӑвӑ-калав е драма хайлавсен сыпӑкӗсене илемлӗн, сасса кирлӗ пек улӑштарса вулани, пӑхмасӑр калани;

- стена хаҫатне заметка, хаҫат-журнала корреспонденци, Интернета пӗлтерӳ ҫырни;

- вӗренӳ кӗнекисенчи тата хушма литературӑри ӑнлантарусемпе, словарьсемпе тата энциклопедисемпе усӑ курма хӑнӑхни.

**8-9-мӗш класс.** Пуплев аталанӑвӗ ҫынсен шухӑшлавӗпе, ӗҫ-хӗлӗпе ҫыхӑннӑ. Вӗренекенсен пуплевне аталантарасси вӑл ачасене чӑвашла тӗрӗс, таса, витӗмлӗ, уҫӑмлӑ еаласа тата вуласа пама, ҫырма ытти ҫынсем е юлташӗсем каланине тимлӗн итлеме вӗрентесси. Илемлӗ хайлава вулас умӗнхи тата вулавпа тишкерӳ урокӗсенче ачасен сӑмах йышне пуянлатас тата чӑвашла илемлӗ те тӗрӗс калаҫма, ҫырма вӗрентес тӗлӗшпе тӑрӑшмалла. Вӗренекенсен вулав тата литература пултарулӑхӗн шайне пӗлнине тӗрлӗ мелпе тӗрӗслемелле. Тӗслӗхрен: а) сӑмах вӗҫҫӗн калаттарса; ӑ) ҫыру ӗҫӗсем урлӑ; б) пултарулӑх ӗҫӗсем ҫыртарса.

- илемлӗ литература, ӑслӑлӑхпа политика, публицистикӑпа критика хайлавӗсене тӗрӗс, ҫӑмӑл, уҫӑмлӑ вулама пӗлни;

- класра е килте вуланӑ хайлавсене ырӑн-ырӑнӑн, туллин е пӗтӗмӗшле кӗскен сюжетласа каласа е ҫырса пани;

- хайлаври хускатнӑ ҫивӗч ыйтусене (проблемӑсене) тупни, илемлӗх мелӗсем хайлав шухӑшне вӑйлатнине ӑнлантарса пани;

- пурнӑҫ чӑнлӑхӗпе автор хӑй ӑсласа тунӑ сӑнарсемпе пулӑмсем хушшинчи шайлашӑва асӑрхани, илемлӗ хайлавра авторӑн кӑмӑлӗпе шухӑш-туйӑмӗ (позицийӗ) мӗнлерех палӑрнине сӑнаса пӗтӗмлетни;

- пултаруллӑ вулав вали партитура туни тата ҫын умнее тухса вуласа е каласа пани, ҫав тӗллевпе илемлӗ текста е статьяна, тӗпчеве ӑша хывни (планлани), тишкерни;

- вӗрентекен каланине е лекцилле калаҫӑва кӗскен ҫырса (конспектласа) пыни, каламалли е ҫырса памалли шухӑшсен плане, тезисне тума пӗлни;

- вуланӑ кӗнеке, курнӑ спектакль, концерт, телекурӑм ҫинчен ҫырса хак пани, ҫавна май сӑнарсемпе пулӑмсене авторӑн позицине харпӑр хӑй мӗнле йышӑннине ӑнлантарни тата сӑлтавлани;

- 5-9-мӗш классенче хӑнӑхнӑ пур йышши изложенисемпе сочиненисен тӗсӗсене аса илсе ҫирӗплетни, ӑсталӑх шайне палӑртакан сочиненисем ҫырни.

**5-7-мӗш класс ачисен результачӗсем**
**вӗренекенсен пӗлӳ, пӗлӳ, пултару, хӑнӑху ӗҫӗ-хӗлӗ;**
**вӗренӳ хевти-талпӑнӑвӗ**

(ВУЛАВ. Класра вуласа тишкерни тата килте вуласа класра сӳтсе явни. Ирӗклӗ вулав)

**Харкамлӑх результачӗсем (шкул ачи хӑйӗншӗн тунисем) шутне:**
- калаҫас, тӑнласа ӑнкарас, ӑнланса вулас енсене аталантарни;
- тӑван сӑмахлӑха вӗрентесси халӑх традицийӗсем ҫинче никӗсленнине ӑнланни;
- тӗнче литературинче чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗпе тӑван литературӑн тӳпи те пысӑк пулнине, ачасене (вулакана) ӑс панине ӑнланса илни;
- ҫыравҫӑ ытларах пурнӑҫри чӑн ӗҫсене мар, хӑй ӑсланӑ пулӑмсемпе геройсене сӑнланса кӑтартнине ӑша хывни;
- илемлӗ хайлавсене вуласа тухнӑ хыҫҫӑн харпӑр хӑй шухӑшне палӑртма пӗлни (хӑй вуланӑ кӗнеке ҫинчен шухӑшланине ҫирӗплетсе пани);
- ҫӗнӗлӗх кӳме, мӗн шутласа хунине ҫине тӑрса пурнӑҫлама хавхаланни.

**Предметсен пӗрлӗхлӗ результачӗсем (пур предмета та вӗренме кирлисем):**
- сисӗм-туйӑм пултарулӑхне ӳстерме пулӑшни, таврари тӗнчене пӗлсе пынӑ май ӗҫе йӗркелес хӑнӑхусем туянма хавхалантарни;
- илемлӗ литература ӑслӑлӑх кӗнекисенчен уйрӑлса тӑнине ӗнентерме пултарни;
- юратнӑ ҫыравҫӑсем, геройсем ҫынсен пурнӑҫне, шухӑш-кӑмӑлне, чун-чӗрине уҫса панине ӑша хывни;
- халӑх сӑмахлӑхӗпе ҫырулла сӑмахлӑх жанрӗсене системӑласа ушкӑнлама пӗлни;
- пӗр темӑпа тӗрлӗ позици пулма пултарнине ӑнланни, вӗсенчен пӗрне суйласа илме е хӑйӗн урӑхла шухӑшне палӑртма пӗлни;
- литература сӑмах ӑсталӑхӗ пулнине, вӑл пурнӑҫа пӗтӗмлетӳллӗ тишкерсе, пӗр-пӗр темӑн (проблемӑн) паллӑрах енӗсене вӑйлатса кӑтартнине палӑртма пӗлни;
- тӑван литература шалашӗнче проектсем пурнӑҫланӑ май вӗренӳ задачисене лартма, проблемӑна татса памалли ҫул-йӗре тупма пӗлни;
- тӑван литература халӑхӑн сӑнарлӑ вӗрентӗвӗ пулнине ӑса хывни, ҫыравӑҫсен курӑмлӑ-сӑнарлӑ шухӑшне пӗтӗмӗшле логикӑллӑ шухӑшлав системине кӗртни, сӑлтавласа каласа пама пултарни.
- тӗп ыйтӑва тата хушма ыйтусене палӑртни, малтанлӑх шухӑшӗсене калани, ӗҫе тунӑ чухне харпӑр хӑйне тӗрӗслесе тӑни, ӗҫ результачӗсене ӑнланса хак пани;

**Предметӑн пайӑрӑм ( ятарлӑ) результачӗсем:**
- хайлавсенче ҫыравҫӑ ытларах чӑн пурнӑҫри фактсене мар, хӑй шухӑшласа кӑларнӑ геройсемпе пурнӑҫри пек сӑнласа кӑтартнине ӑнланни;
- илемлӗ текст тата вулавҫӑ ҫыхӑнӑва тӗпе хурса геройсене хак пани, хакласа ҫырни, хӑйӗн шухӑшне палӑртни;
- илемлӗ хайлав темипе тата тӗп шухӑшне палӑртма пӗлни;
- литература геройӗ, сӑнар, персонаж пӗлтерӗшне ӑнлантарма, сӑнарсене уйрӑммӑн сӑнлама (сӑн-сӑпачӗ, ӗҫ-хӗлӗ, шухӑшӗ, кӑмӑлӗ, тыткаларӑшӗ, пуплевӗ), ушкӑнласа танлаштарма (автор харктеристики) пӗлни;
- хайлав тытӑмне (ӗҫ пуҫламӑшӗ, ӗҫ аталанӑвӗ, ӗҫ хӗрсе ҫитнӗ вӑхӑт, ӗҫ вӗҫӗ) палӑртма пултарни;
- сюжет (событисем, ӗҫсемпе пулӑмсен ҫыхӑнӑвӗ, персонажсем хушшинчи хирӗҫӳ-тытӑҫу (конфликт), пейзаж, интерьер) курма хӑнӑху пулни;
- прозӑллӑ тата сӑвӑллӑ пуплев (ҫыравҫӑ пурнӑҫри ӳкерчӗксене сӑнлани), тропсем (эпитет, танлаштару, сӑпатлантару, метафора), пуплев ҫаврӑмӗсем (фигурисем), антитеза, паралелльлӗх, хутлам, вӑйлату, аллитераци, ассонанс чухлама пӗлни;
- сӑвӑ тытӑмӗ (миҫе ҫавраран тата йӗркерен тӑни), сӑвӑ ҫемми (ритмӗ), састаш (рифма), лирика геройӗ ӑнлавсене уйӑрма пӗлни.

**8-9-мӗш класс ачисен результачӗсем:**

(ВУЛАВ. Класра вуласа тишкерни тата килте вуласа класра сӳтсе явни. Ирӗклӗ вулав)

**Харкамлӑх результачӗсем (шкул ачи хӑйӗншӗн тунисем) шутне:**
- хайлавсенче хускатнӑ моральпе эстетикӑна ӑнланса хывма патриотлӑх, гражданлӑх туйӑмне мала кӑларнине, этемӗн чун-чӗре пахалӑхӗсемпе ҫыхӑнтарса вӗсене тӗрӗс ӑнлантарма пӗлни, йывӑрлӑхра ҫӗнтерме вӗренни;
- ҫын хутшӑнӑвӗсене, ҫынна хисепленине, пӗр-пӗрне ӑнланнине, пулӑшма хатӗр пулнине, тӳрӗ чунлӑха, шанчӑклӑха, вӑрттӑнлӑха упрама пӗлнине, этем ӑс-хакӑл тӗлӗшӗнчен ӳссе пынине, йӗркелӗх принципӗсене вӗрентекен хӑй хаклӑхне курма пулӑшнине ӑнланни;

**Предметсен пӗрлӗхлӗ результачӗсем:**
- вӗренекенсен пӗлӳ, хӑнӑху тучнас, шухӑшлав, ӗҫлес пултарулӑхне аталантарни;

- вĕренӳпе вулав тата тĕпчев урлă халăхăн ĕмĕрхи илемлĕх ăнкарăвне ăса хывни, çыхăнуллă шухăшлава тарăнлатса пыни;
- историри вăл е ку пулăм, ĕç-пуç пирки шухăшлама, çирĕплетсе калама, ытларах хайлавсенче сăнланнă вăхăтпа событие тата геройсене хак пама, танлаштарма, сӳтсе явма, гипотезăсене кăларса тăратса сăлтавлама пĕлни.

**Предметсен пайрăм результачĕсем:**

- 8-мĕш класра литературăра тема тата хронологие, 9-мĕш класра жанра тата хронологипе историе (халăхăн, обществăн пурнăçне) тĕпе хунине пĕлни;
- çыравçă кун-çулĕпе пултарулăх çул-йĕрĕ историллĕ калкçусем çинче никĕсленнине ăнланни;
- авторпа вулавçă хушшинчи çыхăну мелне алла илни;
- хайлавсенче çырса панă вăхăт мĕнле сăнланнине, хакланнине тема, жанр тата истори контекстĕнче пăхмп пĕлни;
- хайлавра пур енчен туллин тишкерме, темипе проблемине, тытăмĕпе сăнарĕсене, конфликчĕпе сюжетне ăнланма, лирикăллă героя уçса пама вĕрентнине аталантарасси;
- çыравçă биографийĕ урлă вăл пурăннă вăхăта хак пама пултармалла (хăш саманара, камсемпе хутшăнса, мĕншĕн кĕрешсе ӳснине, тĕнчекурăмĕ ммĕнле витĕмпе йĕркеленнине, унăн пултарулăхĕ вăл пурăннă вăхăтпа çыхăнса тăнине палăртма пĕлмелле).

## Калаçупа çыру ăсталăхĕн результачĕсем

**Харкамлăх результачĕсем:**

- калаçас, тăнласа ăнкарас, ăнланса вулас енĕсене аталантарни, калаçăва тикĕс, уçăмлă, таса тума хăнăхни;
- вуланине тĕплĕн, текст стилĕпе жанрĕн тĕп уйрăмлăхĕсене çухатмасăр каласа пани;
- текст тăрăх калаçу чĕлхи, илемлĕ литература чĕлхи, официаллă стиль уйрăмлăхĕсене палăртма пултарни;
- сăмах вĕççĕн тĕрлĕ темăпа калав, сăнлав, ăслав мелĕпе каласа пама хăнăхни;
- вулав тата литература пултарулăхĕн шайне тĕрлĕ мелпе аталантарни;
- хайлавра хускатнă çивĕч ыйтусене (проблемăсене) тупни, илемлĕх мелĕсем хайлав шухăшне вăйлатнине ăнлантарса пама пĕлни;
- урнăç чăнлăхĕпе автор хăй ăсласа тунă сăнарсемпе пулăмсем хушшинчи шайлашăва асăрхасси, илемлĕ хайлавра авторăн кăмăлĕпе шухăш-туйăмĕ (позицийĕ) мĕнлерех палăрнине сăнаса пĕтĕмлетни;

**Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем:**

- шухăша çыхăнуллă çырса е сăмах вĕççĕн каласа пама, пĕтĕмлетме, харпăр хăй шухăшне татăклăн та уççăн пĕлтерме, тĕслĕхсемпе çирĕплетме, юлташсене тимлĕн итлеме хăнăхасси;
- илемлĕ хайлавăн ансат, кăткăс, цитатăллă планĕсене сăмахпа каласа тата çырса тăвасси;
- стена хаçатне заметка, хаçат-журнала корреспонденци çырни;
- вĕренӳ кĕнекисенчи тата хушма литературăри ăнлантарусемпе, словарьсемпе тата энциклопедисемпе усă курма хăнăхтарасси.
- илемлĕ литература, ăслăлăхпа политика, публицистикăпа критика хайлавĕсене тĕрĕс, çăмăл, уçăмлă вулама пĕлни;
- каласа е çырса памалли шухăшсен плане, тезисĕсене системăласа пĕтĕмлетме хак пама, танлаштарма, ушкăнлама пĕлни;

**Предметăн пайрăм результачĕсем:**

- вуланă илемлĕ хайлава (текстăн), спектакльпе фильма, телефильма хак пама вĕреннине аталантарни;

- пĕр-пĕр ĕç çинчен (класра е шкулта пулса иртни, экскурсие е пулла кайса килни, каникула епле ирттерни т.ыт.те) сăнласа, калавласа, ăсласа çырса пама хăнăхнине аталантарни;
- пĕр-пĕр героя, персонажа, çынна, çут çанталăк пулăмне, чĕр чуна, вуланă хайлав валли ӳкернĕ иллюстрацисем, картина репродукцийĕсем, слайдсем, фотосем, плакатсем тăрăх изложенийĕсемпе сочиненисем çырни;
- пулса иртнĕ ĕçе-хĕле, вуланă халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене, илемлĕ хайлава литература теорийĕн пĕлĕвĕсемпе усă курса хаклама хăнăхни (ăслава аталантарни);
- сăмаха майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнланма пĕлнине лайăхлатни, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхнине аталантарни;
- сасăсене, вĕсен майлашăвĕсене (интонаци, тембр, пауза, пусăм) тĕрĕс кални, вулас, палăртуллă (пăхмасăр илемлĕ) вулас хăнăхусене çирĕплетни;
- юптарăва, юмаха, калава инсценировка çырас никĕсе (диалог, монолог, полилог, режиссер ремарки ăнлавсем) аталантарни, пысăк мар текст тăрăх киносценарий çырни.
- сăмах вĕççĕн калани (ыйту-хурав мелĕпе, илемлĕ литература хайлавне е сыпăкĕсене ăслани);
- çыру ĕçĕсем çырни (эпикăлла хайлав сыпăкĕсен содержанине каласа е çырса (изложени) пани, хăй мĕн çинчен калассин, çырассин плане туни, литература темипе проект, хайлав, тĕпчев ĕçĕ, эссе, хыпар хатĕрлени);

**Вĕренӳ результачĕсем**
**5-мĕш класра вĕренекенсен çаксене пĕлмелле тата пултармалла:**

- пĕр-пĕр ĕç çинчен (класра е шкулта пулса иртни, экскурсие е пулла кайса килни, каникула епле ирттерни т.ыт.те) сăнласа, калавласа, ăсласа çырса пама хăнăхнине аталантарни;
- пĕр-пĕр героя, персонажа, çынна, çут çанталăк пулăмне, чĕр чуна, вуланă хайлав валли ӳкернĕ иллюстрацисем, картина репродукцийĕсем, слайдсем, фотосем, плакатсем тăрăх изложенийĕсемпе сочиненисем çырни;
- сăмаха майлашăвĕсен пĕлтерĕшĕсене ăнланма пĕлнине лайăхлатни, вĕсемпе пуплевре усă курма хăнăхнине аталантарни;
- сасăсене, вĕсен майлашăвĕсене (интонаци, тембр, пауза, пусăм) тĕрĕс кални, вулас, палăртуллă (пăхмасăр илемлĕ) вулас хăнăхусене çирĕплетни;
- çыру ĕçĕсем çырни (эпикăлла хайлав сыпăкĕсен содержанине каласа е çырса (изложени) пани, хă
й мĕн çинчен калассин, çырассин плане туни, литература темипе проект, хайлав, тĕпчев ĕçĕ, эссе, хыпар хатĕрлени);
- юптарăва, юмаха, калава инсценировка çырас никĕсе (диалог, монолог, полилог, режиссер ремарки ăнлавсем) аталантарни, пысăк мар текст тăрăх киносценарий çырни.
- сăмах вĕççĕн калани (ыйту-хурав мелĕпе, илемлĕ литература хайлавне е сыпăкĕсене ăслани);

**Вĕренӳ результачĕсем**
**6-мĕш класра вĕренекенсен çаксене пĕлмелле тата пултармалла:**

-Хайлавсен авторне тата хайлава мĕншĕн çапла ят панине ăнлантарма;

-вĕреннĕ хайлавсен темипе тĕп шухăшне, тытăмĕн уйрăмлăхĕсене кăтартма, хайлавсенчи ĕçсен йĕркине, сăнарсене пĕр-пĕринпе танлаштарма, вĕсен хушшинчи çыхăнăва палăртма;

-литература хайлавĕсен илемлĕх мелĕсене тишкерме;

-драма, лирика тата лиро-эпика хайлавĕсен уйрăмлăхĕсене уçса пама;

-программăра кăтартнă текстсене пăхмасăр калама.

- хайлаври ĕçсен йĕркипе тытăмĕн пĕлтерĕшне уçса пама;

- хайлавĕсен илемлĕх мелĕсене тупма, вĕсен шухăшпа сăнарлăх пĕлтерĕшне кăтартма;

- учитель ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса геройне характеристика пама;

- хайлаври геройсене пĕр-пĕринпе тата пурнăçри çынсемпе танлаштарма;

- илемлĕ литература, ăслăлăх тата публицистика хайлавĕсене тĕрĕс вулама, кирлине çырса илме;

- вĕреннĕ хайлав çинчен каласа пама; ыйтăва туллин хуравласа, сăнарсене ушкăнлама, сочинени çырма;

- прозăлла сăвă хайлама;

- е унăн пĕр сыпăкĕн планне тума;

- килте вуланă литература е ытти ӳнер хайлавĕ çинчен (харпăр хăй шухăшне пĕлтерсе) калама е çырма;

- хрестоматири тата вуланă кĕнекесенчи ăнлантарса панă материалпа, словарьсемпе, справочниксемпе усă курма.

**7 класс пĕтернĕ çĕре ачасен мĕн-мĕн пĕлмелле.**

**Вĕренекенсен çаксене пĕлмелле тата пултармалла.**

_ хайлавсен авторне тата хайлава мĕншĕн çапла ят панине ăнлантарма;

_ вĕреннĕ хайлавсен темипе тĕп шухăшне: тытăмĕн уйрăмлăхĕсене кăтартма; хайлавсенчи ăçсен йĕркине: сăнарсене пĕр-пĕринпе танлаштарма: вĕсен хушшинчи çыхăнăва палăртма;

_ литература хайлавĕсен илемлĕх мелĕсене тишкерме;

_ драма, лирика тата лиро-эпика хайлавĕсен уйрăмлăхĕсене уçса пама;

_ программăра кăтартнă текстсене пăхмасăр калама;

- çыравçă тунă сăмахсене курма, тавçăрса илме, çавăн евĕрлĕ пĕчĕк сценăсем, калавсем, юрăсем, ӳкерчĕк-тĕрленчĕк çырма;

- хайлаври ĕçсен йĕркипе тытăмĕн пĕлтерĕшне уçса пама;

- хайлаври илемлĕх мелĕсене тупма, вĕсен шухăшпа сăнарлăх пĕлтерĕшне кăтартма;

- учитель ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса литература геройне характеристика пама;

- хайлаври геройсене пĕр-пĕринпе тата пурнăçри çынсемпе танлаштарма;

- илемлĕ литература, ăслăлăх тата публицистика хайлавĕсене тĕрĕс вулама, кирлине çырса илме;

- вĕреннĕ хайлав çинчен каласа пама; ыйтăва туллин хуравласа, сăнарсене уйрăммăн танлаштарса: ушкăнласа сăнарлама, сочинени çырма;

- прозăлла сăвă хайлама;

- эпика хайлавĕн е унăн пĕр сыпăкĕн планне тума;

- килте вуланă е ытти ӳнер хайлавĕ çинчен (харпăр хăй шухăшне пĕлтерсе) калама е çырма;

- хаçатри тавлашу материалĕсене сӳтсе явнă чухне хăйĕн шухăшне уçса пама, интервью илме, репортаж е тĕрленчĕк çырма, стена хаçачĕ, журнал кăларма;

- хрестоматири тата вуланă кĕнекесенчи ăнлантарса панă материалпа, словарьсемпе, справочниксемпе усă курма.

**Программа (вĕренӳ) содержанийĕ**
**5 класс (70сехет)**
**I пай. 1.Халăх сăмахлăхĕ (10сехет)**

**1. Халăх юмахĕсем.** Асамлă, йăла, чĕр чунсем çинчен калакан юмахсем. Асамлă юмахсем паттăрла ĕç-хĕлпе кăсăклантарни, вĕсенчи приключени мелĕ. Юмахсенчи ырă тата усал. Юмахсенчи асамлăх япалисем. Чĕр чунсене этем пек калаçтарни. Этемпе чĕр чуна куçăмлăн сăнарлани.

**2. Сăпка юррисем. Чĕнӳ - йыхрав сăввисем.**

Юрă этеме пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтерме, халăх тытса пыракан ырă йĕркепе пурăнма вĕрентни, ырра малалла аталантарма пулăшни, телейшĕн кĕрешме хавхалану кӳни.

**3. Календарлă йăла уяв сăмахлăхĕ.** Сурхури, çăварни юррисем. Кĕшерни тата сĕрен юррисем.

Яланах çулталăкра пĕр вăхăтра килни. Йăла уявĕсем авал асамлă (ăрăмлă) пĕлтерĕшлĕ пулни. Халăх вĕсене çут çанталăк пулăмĕсене хăй майлă çавăрас, выльăх-чĕрлĕ ĕрчетес, çĕр ĕç тухăçлăхне çĕклес, хăйĕн пурнăçне çăмăллатас, йăх аталантарас тĕлĕшпе ирттерни.

**4. Ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсем.**

Ваттисен сăмахĕсем – чăваш халăхĕн ытарайми ăсталăхĕ: илемлĕ, ăслă, тарăн шухăшлă сăмахсем. Вĕсен чун-чĕре илемлĕхне палăртас, ĕçченлĕхне вĕрентес ĕçри пахалăхĕ.

**5.Тупмалли (сутмалли) юмахсем (туптармăшсем)** – халăхăн нихăçан кивелмен поэзи хайлавĕсем. Вĕсем халăх ăс-тăнĕн, фантазийĕн иксĕлми çăл куçĕ.

**6. Литература юмахĕсем.**

Константин Иванов. „Тимĕр тылă”.

Владимир Бараев. „Этикан Утиканпа”.

Елена Нарпи. „Ылтăн тулă пĕрчи”.

Халăх сăмахлăхне пухса, сюжечĕсемпе усă курса, урăхлатса çĕнетнĕ хайлавсем. Юмахсенчи пурнăç чăнлăхĕ. Вĕсенче этеме пур енлĕн сăнлани, ăса вĕрентсе калани.

**II пай. 2.Чăваш çыравçисем чĕр чунсем çинчен (6 сехет)**

Ева Лисина. «Пăркка мучи» калавĕсем. («Мускав кушакĕсене чапа кăлартăм» калав).
Николай Ишентей. „Чĕп хуралĕнче“ сăвă.
Трубина Мархви. „Чăхпа кушак“ калав.
Георгий Орлов. „Çерçи“ тĕрленчĕк.
Нелли Петровская. "Качака" калав.
Нестер Янкас. "Вихтăрпа шăнкăрч" сăвă.
Александр Угольников. „Хура ĕне” калав.
Иван Ивник. „Юрăçсем“ сăвă.
Николай Мăскал. „Выльăх чĕлхи“ сăвă.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи ачасен сăнарĕсем. Чĕрĕ чунсемпе этем хушшинчи туслăх. Çĕр çинчи пур чĕр чуна упраса хăварас, юратас, шеллес, хӳтĕлес туйăма аталантарас шухăшсем. Çак сăнарсен кулăшла ĕçĕсем, хуйхи-суйхи. Хайлавсен тĕсĕсем, жанрĕсем.

**3. Чăваш çыравçисем тăван кил, туслă çемье, аслисемпе кĕçĕннисен кăмăл-сипет сыпăнăвĕ çинчен (5 сехет)**

Юрий Скворцов. Амаçури анне“ калав.
Геннадий Волков. „Ăслă ача“ калав.
Иван Яковлев.„Çемйĕре лайăх пăхса усрăр...(„Халал“ сыпăкĕ).
Николай Теветкел. „Карттă” сăвă.
Людмила Сачкова. „Çиçĕм Натюш“ калав.
Валерий Раштав.“Аннен çуралнă кунĕ“ сăвă.
Юрий Сементер. „Амăшĕн чунĕ“ сăвă.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи ачасемпе пысăккисен сăнарĕсем. Тăван кил - ăсталăх вырăнĕ, кил ăшши, чун ăшши. Чи çывăх тăвансен юратăвĕ, ашшĕ-амăшĕ тăван ачана ăслă-тăнлă çын тăвас тесе пулăшни. Çамрăксемпе ваттисем хушшинчи çураçулăх. Хайлав тытăмĕнчен шалти саккунĕнчен жанр тĕсĕ тухни.

**4.Чăваш çыравçисен чăваш халăхĕн маттур ывăлĕсемпе хĕрĕсем çинчен. Халăх паттăрĕсем литература сăнарĕсем пулса тăни (6 сехет)**

Порфирий Афанасьев. „Кăйкăр“ поэма сыпăкĕ.
Тихăн Петĕркки. „Çутталла“ („Кушкă ачи“ поесть сыпăкĕн) инсценировки.
Галина Матвеева. „Чăваш“ поэма сыпăкĕ.
Валентин Бурнаевский. „Симĕс генерал“ калав.
Георгий Ефимов. „Сăпка“ сăвă.
Петĕр Хусанкай. „Тезаврус лингве чувашорум“ сăвă.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи чăн пурнăçра пулнă, халăхшăн тунă ĕçĕсемпе чапа тухнă паллă çынсем çинчен. Халăх паттăрĕсем литература сăнарĕсем пулса тăни. Хайлав тытăмĕнчен, ĕçĕсемпе сăнарĕсенчен жанр тĕсĕ тухни.

**5.Чăваш çыравçисен мал ĕмĕтлĕ, таса чунлă çынсем çинчен (7 сехет)**

Мария Ухсай. „Ирхи сывлăм“ калав.
Петĕр Ялкир. „Интермедисем“.
Марина Карягина. „Слива вăрри “ калав.
Хветĕр Уяр. „Эсир Куçука курман-и ?“ калав.
„Ӳкĕт“ хайлав (Иван Яковлев букварĕнчен).
Геннадий Айхи. „Кĕске халал“ сăвă.
Исмай Исемпек. „Чун хуралçи“ калав.
Валерий Михайлов. „Ватта сума су“ инсценировка.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенче çын пурнăçне тĕрлĕ лару-тăрура, ĕçре-хĕнре кăтартни. Ырăпа юнашар ялан усал çӳрет шухăша аталантарни. Халăх кăмăлĕн ырă енĕсене йышăнмалла пирки пĕтĕмлетӳсем туни. Хайлав ăшĕпе тытăмĕ.

**6. Чăваш çыравçисем ĕçченлĕх, тирпейлĕх, çирĕплĕх, тÿсĕмлĕх çинчен (7 сехет)**

Иван Егоров. „Ывăл“ калав.
Александр Галкин. „Икĕ сăнлă пурнăç“, „Çÿпĕ“ юптарусем.
Владимир Степанов. „Эксклюзивлă сăвăм“ калав.
Елизавета Осипова. „Пахчари хÿшĕ“ калав.
Василий Кервен. „Тÿсĕм“ сăвă.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи сăнарсем ĕçре ăса çивĕчлетнине, туслăх çуралнине, кăмăл пуянланнине, чун çирĕплĕхне туптани. Хайлав ăшĕпе тытăмĕ, ĕçĕсемпе сăнарсем.

**7. Чăваш çыравçисем çыннăн çĕр-шыв, тăван-пĕтен, чи çывăх çынсем умĕнчи (ăру çыхăнăвĕ) парăмсем çинчен (6 сехет)**

Лидия Сарине. „Цирк курма кайни“ калав.
Раиса Сарпи. „Эпĕ „тухатмăш карчăкпа паллашни“ калав.
Иван Яковлев. „Пĕр-пĕринпе сапăр пулăр“ („Халал“ сыпăкĕ).
Архип Александров. „Тĕрĕс тунă“ пьеса.
Юхма Мишши. „Путĕш Патян мыскарисем“ кулăшла калавсем.
Александр Кăлкан. „Панулми“ калав.
Антонина Васильева. „Çĕн кайăкпа кантраллă кукăль“ калав.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи аслисемпе ачасен сăнарĕсем. Аслисене хисеплеме, вĕрентсе каланине итлеме, йывăрлăхра пулăшма хăнăхса пыни, пурнăç тÿнтерлĕхĕсемпе килĕшменни, чун-чĕре тасалăхне упрани. Хайлавсен тĕсĕсем, жанрĕсем хайлав тытăмĕнчен, шалти саккунĕнчен, ĕçĕсенчен, сăнарсенчен жанр тĕсĕ тухни.

**8. Чăваш çыравçисен хайлавĕсенчи çут çанталăк илемне упрас шухăш-кăмăла аталантарсси çинчен (5 сехет)**

Валери Туркай. „Айăп“ калав.
Георгий Ефимов. „Хĕвел тухнă вăхăтра“ сăвă.
Ухсай Яккăвĕ. „Çĕмĕртсем çеçке çурсан“ сăвă.
Петĕр Вашават. „Вăйăран вăкăр тухать“ калав.
Арсений Тарасов. „Ăвăс хунавĕ“ калав.

Ачасемпе пысăккисем валли хайланă хайлавсенчи çут çанталăк пулăмĕсемпе тапхăрĕсене, илемне, тăван çĕре, тискер чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕк сăнарĕсене чĕрĕ пек сăнлани. Çыравçăсем вĕсем урлă этем тĕнчин вăрттăнлăхĕсене, ĕмĕрхи хаклăхсене кăтартса параççĕ.

Никита Бичурин. «Байкал» очерк сыпӑкӗсем. (В. Станьял куҫарнӑ).

**19 ӗмӗрти литературӑран – 6 сехет**

Спиридон Михайлов-Янтуш. Юнка сӑвӑ, «Хӗрринче выртасшӑн мар», «Сунарҫӑн пуҫ пулнӑ-и?», «Шупашкарти сыснаккайсем» шӳтсем.

Дмитрий Ознобишин. Ӳпкев. Пӗрин йӑл кули улталарӗ мана. Сӑвӑсем.

Сергей Чунтеров. Пирӗн йӑх. («Манӑн пурнӑҫ» повеҫӗн сыпӑкӗ).

Николай Ашмарин. Качи ҫӑви. Калав.

**<u>20 ӗмӗрти чӑваш литератури – 35 сехет</u>**

**20 ӗмӗр пуҫламӑшӗнчи лару-тӑру – 2 сехет**

Николай Шелепи. Раҫҫей. Кӗпер хывни. Сӑвӑсем.

Илле Тӑхти. Шерхулла. Калав.

**20 ĕмĕрĕн çирĕммĕш çулĕсем – 3 сехет**

Исаев Мĕтри. Рабфак хĕрĕ. Калав.

Мĕтри Юман. Пӳлĕх йăмри. Новелла.

Митта Ваçлейĕ. Çĕршывăм, çĕршывăм, мĕн кирлĕ сана?. Сăвă.

**Вăтăрмĕш çулсенчи хайлавсем – 7 сехет**

Нестер Янкас. Катя. Калав.

Илле Тукташ. Шурă кăвакарчăн. Шур Атăлта акăш ярăнать. Уйрăлу. Сăвăсем.

Ефрем Еллиев. Чĕн тилхепе. Калав.

Андрей Петтоки. Тĕнче кĕвви. Сăвă.

**20 ĕмĕр варринчи чăваш литератури (40 – 50-мĕш çулсем) – 9 сехет**

Александр Алка. Июнĕн 22-мĕшĕ. Бранденбург хапхи умĕнче.Сăвă.

Петĕр Хусанкай. Натали кĕпе тĕрлет. Манн çăлтăр. Мунча шăрши. Сăвă.

Александр Артемьев. Симĕс ылтăн (повесть сыпăкĕсем).

**20 вĕçĕнчи чăваш литератури – 14 сехет**

Ухсай Яккăвĕ. Манна тутар сăнарлă теççĕ. Кăвак хуппи. Анне мана тирпейлĕ пиеленĕ. Сăвă.

Ухсай яккăвĕ. Атта-анне. Поэма сыпăкĕсем.

Николай Терентьев. Çил çинчи çеçпĕл. Драма.

Юрий Скворцов. Хĕрлĕ мăкăнь. Повесть.

Василий Петров. Çăлăнăç. Повесть.

**<u>8 тата 9 классенче вĕреннине аса илни – 2 сех.</u>**

**Чăваш литератури: Вăтам шкулăн 9-мĕш класĕ валли**

/ В.П.Никитин (Станьял) пухса-çырса хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2014. – 335с.

| № | | Раздел ячĕ | Урок теми | Сехет |
|---|---|---|---|---|

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | шучĕ |
| 1 | | **Кӳртĕм калаçу** | Сăнарлă сăмахпа халăх пурнăçĕ. | 1 |
| 2 | | **Халăх сăмахлахĕпе авалхи çырулăх** | Кĕлсемпе сăвапсем. Сăмахлăхри илемлĕх мелĕсем, пуплев фигурисем | 1 |
| 3 | | | Ăрăмлă чĕлхе асамлăхĕ. Ăрăмлă чĕлхен жанресемпе паллисем. Калмаксем. Вĕсен тесĕсем | 1 |
| 4 | | **Атăлçи Пăлхар тапхăрĕ** | Кӳртĕм тишкерӳ. Несĕлсен çыруллă палăкĕсем | 1 |
| 5 | | | Паласахун Юсупĕ. «Хăтлă пĕлӳ» хайлав куçарăвĕ, виçи, илемлĕх мелĕсем | 1 |
| 6 | | **XVII ĕмĕрти литературăран** | Кӳртĕм тишкерӳ. Калай Малля пултарулăхĕ | 1 |
| 7 | | **XVIII ĕмĕрти литературăран** | Кӳртĕм тишкерӳ. Хайлавсен публицистикăлла çивĕчлĕхĕ | 1 |
| 8 | | | Н.Бичурин пурнăçĕпе пултарулăхĕ. «Байкал» хайлав жанрĕ, тĕсĕ, хавхи | 1 |
| 9 | | | Байкал» хайлав жанрĕ, тĕсĕ, хавхи | 1 |
| 10 | | **XIX ĕмĕрти литературăран** | Кӳртĕм тишкерӳ. Литература аталанăвĕн ӳсĕмĕ, çитменлĕхĕ, темăсем, лирика, проза. Кулăшпа питлев хайлавĕсем | 1 |
| 11 | | | С. Михайлов- Янтушăн «Юнка», «Хĕрринче выртасшăн мар», «Сунарçăн пуç пулнă-и?» хайлавĕсем. Тема, лирика геройĕ | 1 |
| 12 | | | Килти вулав урокĕ. Литературăна аталантарма пулăшнă çыравçăсем, вĕсен хайлавесем | 1 |
| 13 - 14 | | | Çыру ăсталăхне якатмалли урок. Сочинени „"Чăваш халăх сăмахлăхĕ-пирĕн ăс-тăн, вăй- хăват." | 1 |
| 15 | | **XX ĕмĕрти чăваш литератури** | Кӳртĕм тишкерӳ. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи лару-тăру | 1 |
| 16 | | | . Калаçу урокĕ. «20-30 çулсенчи проза аталанăвĕ: тема, проблема» | 1 |
| 17 | | | Килти вулав | |
| 18 | | **XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсем** | Кӳртĕм тишкерӳ. Лирикăри, прозăри, драматургири жанрсем, проблемăсем, сăнарсем | 1 |
| 19 | | | Митта Ваçлейĕн пурнăçĕпе пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем | 1 |
| 20 | | | «Анатри юрă», «Тăван чĕлхем! …» хайлавсенчи сăвă виçи, илемлĕх мелĕсем | 1 |
| | | | Çыру ăсталăхне якатмалли урок М.Ваĕлей\-палл= лирик, куĕаруĕ=, публицист. | |
| 18 | | **30-мĕш çулсенчи хайлавсем** | Кӳртĕм тишкерӳ. 30-мĕш çулсенчи литератрура аталанăвĕ | 1 |
| 19 | | | Килти вулав. Калаçу урокĕ. Н.Янкас. «Катя» | 1 |
| 20 | | | Е.Еллиев пурнăçĕпе пултарулăхĕ. «Чĕн | 1 |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | тилхепе» хайлав теми, проблеми | |
| 21 | | | А.Петтокин кĕске ĕмĕрĕ. «Тĕнче кĕвви» хайлав теми, проблеми, лирика геройĕ | 1 |
| 22 | | | Çыру ăсталăхне якатмалли урок.Сочинени çырма хатĕрленни 20-30-м\ш ёулсенче пурн=ёпа вил\м проблемисене хускатн= ёыравё=сен пултарул=х\. | 1 |
| 23 | | **ХХ ĕмĕр варринчи чăваш литератури (40-50-мĕш çулсем)** | Кўртĕм тишкерў | 1 |
| 24 | | | А.Алка пурнăçĕпе пултарулăхĕ. «Июнĕн 22-мĕшĕ» сăвă теми, проблеми, хавхи | 1 |
| 25 | | | «Бранденбург хапхи умĕнче» сăввăн теми, проблеми, тытăмĕ | 1 |
| 26 | | | П.Хусанкай пултарулăхĕн хăйне евĕрлĕхĕ. «Аптраман тавраш» сăвăлла роман сыпăкĕ | 1 |
| 27 | | | П.Хусанкай пултарулăхĕнчи жанр хăйне евĕрлĕхĕ: сăвă ярăмĕ, сăвăлла роман | 1 |
| 28 | | | «Ман çăлтăр», «Мунча шăрши» хайлавсен жанр уйрăмлăхĕсем | 1 |
| 29 | | | «Çиле хирĕç çўрен ут юртать…» савă: ячĕ, теми, проблеми, тĕсĕ | 1 |
| 30 | | | Çыру ăсталăхне якатмалли урок. Сочинени | 1 |
| 31 | | | А.Артемьев пурнăçĕпе пултарулăхĕн теп тапхăрĕсем. «Симĕс ылтăн» хайлав ячĕн пĕлтерĕшĕ | 1 |
| 32 | | | «Симĕс ылтăн» хайлав жанрĕ, тĕсĕ. Хайлавра сăнланнă истори тапхăрĕ | 1 |
| 33 | | | «Симĕс ылтăн» хайлаври хирĕçў. Сюжетпа композици йĕркеленĕвĕ | 1 |
| 34 | | | Килти вулав. Калаçу урокĕ. «Совет салтакĕн паттăрлăхĕ, чыслăхĕ, тасалăхĕ» | 1 |
| 35 | | | Çыру ăсталăхне якатмалли урок. Сочинени В.Актаев-вăрçăпа ĕç паттăрĕ. | 1 |
| 36 | | **ХХ ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш литератури** | Кўртĕм тишкерў. Лирикăра, прозăра, драматургире сăнланнă истори тапхăрĕпе событисем | 1 |
| 37 | | | Ухсай Яккăвĕн пурнăç çул-йĕрĕпе пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем. «Мана тутар сăнлă тессе...» сăвă тĕсĕ, теми, проблеми | 1 |
| 38 | | | Ухсай Яккăвĕн хайлавĕсен тĕсĕсем. Сăвăсенчи проблемăсем, композици уйрăмлăхĕсем | 1 |
| 39 | | | «Атте-анне» позма сыпăкĕсем. Хайлав тĕсĕ, ячĕн пĕлтерĕшĕ, теми, проблеми | 1 |
| 40 | | | Н.Терентьевăн пултарулах çул-йĕрĕ. Çыравçă хускатнă темăсем, проблемăсем | 1 |
| 41 | | | «Çил çинчи çеçпĕл» хайлав теми, проблеми. Тĕп конфликта тытса пыракан | 1 |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | паллăрах сăнарсем | |
| 42 | | | «Çил çинчи çеçпĕл» хайлав ячĕ, сăнарсен характеристики, хайлав композицийĕ, илемлĕх мелĕсем | 1 |
| 43 | | | Ю. Скворцов пурнăçĕпе пултарулăхĕн тĕп тапхăрĕсем. Писателĕн чăваш литературинчи вырăнĕ | 1 |
| 44 | | | «Хĕрлĕ мăкăнь» хайлав жанрĕ, тĕсĕ, темипе проблеми тачă çыхăнни. Сăнарсем, вĕсен характеристики | 1 |
| 45 | | | «Хĕрлĕ мăкăнь» хайлаври сăнарсен хăйне евĕрлĕхĕ. Сăнарсен тĕнче курăмĕ автор тĕнче курăмĕпе пĕр килни | 1 |
| 46 | | | Килти вулав. Калаçу урокĕ. «Пĕрремĕш юрату вăл – телей, савăнă, хавхалану», «Пур-и çĕр çинче таса юрату?»темăсемпе вуланă хайлавсене çӳтсе явни | 1 |
| 47 | | | Пуплев ăсталăхне якатмалли урок.Сочинени | 1 |
| 48 | | **VIII тата IX классенче вĕреннине аса илни** | VIII тата IX классенче вĕреннине аса илни | 1 |
| 49 | | | Вĕреннине аса илни | 1 |
| 50 | | | Вĕреннине аса илни | 1 |
| 51 | | | Пĕтĕмлетӳ урокĕ | 1 |

Приложение

к основной общеобразовательной программе

основного общего образования

Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение

«Таушкасинская средняя общеобразовательная школа имени полного

кавалера орденов Славы Германа Терентьевича Прокопьева»

Цивильского муниципального округа Чувашской Республики

# РАБОЧАЯ ПРОГРАММА

**по чувашскому языку**

**5-9**

**(классы)**

**2023-2024 уч. год**

**(сроки реализации)**

Рабочую программу разработал (-а): Александрова И. Л

Ф.И.О.

должность: учитель чувашского языка

Таушкасы 2023

**Ăнлантарса пани**

Ĕç программине аяларах панă документсене тĕпе хурса йĕркеленĕ:

- стандарт: Стандарт основного общего образования по чувашскому языку в образовательных учреждениях с родным (чувашским) языком обучения. Утверждён приказом Министерства образования и молодёжной политики Чувашской Республики от декабря 2006 года № 906.

- Государственные образовательные стандарты начального общего, основного общего, среднего (полного) общего образованиĕ в Чувашской Республике. Национально-региональный компонент.- Чебоксары,2007.

- Федеральный базисный учебный план и примерные учебные планы для образовательных учреждений Российской Федерации, реализующих программы общего образования Министерство образования и науки Российской Федерации.– М.2004. – 32с.

- Закон РФ об образовании. №32-66-1 в редакции ст. 32, от 17.12. 2010г.

- Чăваш Республикин чĕлхесем çинчен калакан законĕ.

- Фундаментальное ядро содержания общего образования./ под. ред. Козлова В.В., Козлова А.М., М: Просвещение, 2009.

- Региональный перечень учебников и учебных пособий, рекомендуемых НМС Министерством образования и молодёжной политики Чувашской Республики на 2015-2016 учебный год / Народная школа. № 2 (137), 2015.

**- программа**: Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем валли. И. Андреев, Г.Семенова, Ю. Виноградов хатĕрленĕ. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013. – 63 с.

Çак программăпа 7-мĕш класра пĕр вĕренекен- ЗПР.

Чăваш чĕлхи программи: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем. И. Андреев хатĕрленĕ – Шупашкар, 2007.

**-вĕренӳ кĕнекисем:** Чăваш чĕлхи: 5-мĕш класс валли / Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф.Брусова. – Шупашкар, Чăваш кĕнеке издательстви, 2014. – 239 с.

Чăваш чĕлхи: 6-мĕш класс валли/Л.Г.Петрова, Ю,М. Виноградов – Шупашкар:ăваш кĕнеке издательстви, 2008. – 206 с.

Чăваш чĕлхи:7-мĕш класс валли./Ю.М.Виноградов, Л.Г.Петрова. – Шупашкар:Чăваш кĕнеке издательстви, 2016. – 223с.

Чăваш чĕлхи: 8-9-мĕш класс валли. И.А.Андреев. – Шупашкар:Чăваш кĕнеке издательстви. 2009.

## Вĕренӳ предметне пĕтĕмĕшле хаклани

Чăваш чĕлхи кашни чăваш çыннишĕн тăван чĕлхе, амăшĕн чĕлхи пулса тăрать. Тăван чĕлхе пулăшнипе кашниех мĕн ачаран хăй таврашĕнчи тĕнчене ăнкарса пырать, пурнăç пулăмĕсене ăнланма, ăс-хакăлне ӳстерме вĕренет. Тăван чĕлхене пĕлни ытти чĕлхесене вĕренме, çавна май ытларах пĕлӳ илме пулăшать. Ачасене чĕлхен аталанăвĕпе, словарь майĕпен улшăнса тата пуянласа пынипе тата ытти кăсăклă ыйтусемпе паллаштарни чĕлхене анлăрах тишкерсе хаклама вĕрентет, тавра курăма сарать. Тăван чĕлхене вĕренсе шкул ачи хăйĕн пĕлĕвне ӳстерсе пырать, чĕлхе саккунĕсемпе паллашни ăна тĕрĕс шухăшлама вĕрентет. Унпа пĕрлех вĕренекенсен калаçăвĕ тата çыру хăнăхăвĕ аталанать, пĕтĕмĕшле культура шайĕпе тавра курăмĕ ӳсет, анлăланать.

Тăван чĕлхен воспитани тĕллевлĕхĕ пысăк: чĕлхемĕр çамрăк ăрăва тивĕçлĕ шайра пăхса ӳстерме пулăшать, ĕçе хăнăхтарать, тĕрлĕ информаци çăл куçĕпе усă курма вĕрентет.

## Тăван чĕлхене вĕрентессин тĕллевĕсем

Наци шкулĕсенче тăван чĕлхене вĕрентессин тĕп **тĕллевĕсем** çаксем:

- чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулнине тĕпе хурса ăна хисеплеме, юратма, культура пулăмĕ иккенне, илемлĕх пуянлăхĕ пулнине ăнланма вĕрентесси; тăван чĕлхемĕрĕн обществăри вырăнне (çынсем хутшăннă чухнехи кирлĕлĕхне), чĕлхере чăвашăн кăмăл-сипет, моральпе этика нормисем, шухăшлав манерĕ, тавра курăмĕ палăрнине кăтартасси;
- чăваш чĕлхине кулленхи пурнăçра, вĕренӳре усă курмалăх алла илме, тăван чĕлхепе усă курса кирек мĕнле самантра та хутшăнма хатĕр пулма, пуплеве куллен-кун якатма хавха пухма хатĕрлесси; кулленхи вĕренӳре кирлĕ хăнăхусене, пур енлĕ вĕренӳ ĕç-хĕл мелĕсене (ĕç тĕллевĕсене сăмахпа каласси, планласси, пуплев енчен тĕрĕслесси, тӳрлетесси; библиографи шыравĕ тăвасси, чĕлхе словарĕсенче, Интернетра тата ытти информаци хатĕрĕсенче кирлĕ материал тупасси, ăна тишкересси, илнĕ информацие кирлĕ пек улăштарасси, çĕнетесси т.ыт.те) алла илме пулăшасси;
- чăвашла пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма, чĕлхе нормисене хутшăнăвăн тĕрлĕ лару-тăрăвĕнче тытса пыма, пуплев этикетне пăхăнма хăнăхтарасси; чĕлхе тытăмĕ çинчен, вăл пуплевре мĕнле палăрни çинчен пĕлӳ парасси; чĕлхе факчĕсене уйăрса илме, тишкерме, танлаштарма, ушкăнлама тата хаклама пултараслăха аталантарасси; пуплевре ялан усă куракан е усă курма хатĕр сăмах йышне ӳстересси; пуплеве чĕлхен грамматика хатĕрĕсемпе пуянлатма хăнăхтарасси; орфографипе пунктуаци енчен тĕрĕс çырма вĕрентесси; сăмахсемпе стиль енчен вырăнлă усă курма вĕрентесси; пуплеве куллен-кун лайăхлатас, пуянлатас тĕллеве çирĕплетесси.

## Чăваш чĕлхи предмечĕн вĕрентӳ планĕнчи вырăнĕ

Вĕренӳ учрежденийĕнче чăваш чĕлхи сехет шучĕпе базис планне пăхăнса тăрать. Çирĕплетнĕ вĕренӳ планĕ 5-мĕш класра чăваш чĕлхи вĕрентме 102 сехет, эрнере 3 сехет, 6-8-мĕш классенче 2-шер сехет, 9-мĕш класра сехет çуршар уйăрнă.

**Фонетикăра** сасăпа сас паллине пĕр пĕринчен уйăрасси çине тимлĕн пăхмалла. Сасă - калаçури пулăм, саспалли – çырури пулăм. Сасăпа саспалли хушшинче пĕрпеклĕх çук: пĕр чух калаçури пĕр сассах çырура икĕ саспаллипе палăртатпăр (ял – йал, юр – йур, ешĕл - йешĕл). Сасса палăртман саспаллисем те пур – **ъ, ь.**

Чăвашпа вырăс чĕлхисенче пĕрешкелтерех илтĕнекен сасăсем те пур: ударении хыççăнхи **ă, ĕ** сасăсем, чăваш чĕлхинчи янăраса илтĕнекен шавлă хупă сасăсем (атă, сасă, кашăк). Вĕренекенсене çаксене çине тăрса ăнлантарма тивет: **ӳ** саспалли чăваш сăмахĕсенче кăна,**б, г, д, ж, з, о, ф, ц** сас паллисем вырăсларан йышăнакан сăмахсенче кăна çырăнаççĕ.

Çырура **б, г, д, ж, з, ф, о, ц** сас паллисем пурри çав сасăсем чĕлхере те пурине пĕлтермест. Хальлĕхе ку сасăсем вырăсларан йышăнакан сăмахсенче кăна, чăваш сăмахĕсем çине куçайман.

Чăвашпа вырăс фонетикинчи уйрăмлăхсене учителĕн ытти чухне те шута илме тивет. Тĕслĕхрен, сингармонизма пула чăваш чĕлхинче малти ретри уçă сасăсем умри хупă сасса та, хыçрине те çемçетеççĕ (кĕл, тĕн, кĕлет). Вырăс чĕлхинче вĕсем хыçри хупă сасса çемçетеççĕ (пел,сел).

Сингармонизма пăхăнманнине чăваш сăмахĕсенче те асăрхама пулать.

*Каяппăр, тăрăшша, куççем (каятпăр, тăрăшса, куçсем* вырăнне)теме хушнине те килĕшме йывăр. Капла калаçасси – ĕлĕкхи калаçу норми. Хальхи орфоэпи нормисем çапах та калаçу çине мар, çыру нормисем çине таянаççĕ.

**Лексикăра** омонимсем, синонимсем, антонимсем çинчен ытларах калаçнă. Уйрăмах вырăсларан çыру урлă кĕрекен сăмахсене чăвашлисенчен уйăрма пĕлни кирлĕ – унсăрăн тĕрĕс çырма хăнăхтарма йывăр.

Пирĕн чĕлхе нумай чухне çĕнĕ ăнлава пĕр сăмаха мар, сăмах майлашăвĕпе палăртать: хыт кукар
«скряга», хăмла çырли «малина», тур палли «родинка», тĕне кĕр креститься, принять православие».

Словарьсенче те кун евĕр пĕрлешӳсене шыраса тупма çăмăл мар. Апла пулин те шкул учебникĕнче вĕсем çинчен асăнни кирлех.

**Морфологи** чăваш чĕлхи вĕрентĕвĕнче хальлĕхе чи кăткăс та уçăмланса çитеймен пай шутланать. Тĕпчевçĕсем 11 пуплев пайĕ çинчен калаçаççĕ: япала ячĕсем, паллă ячĕсем, хисеп ячĕсем, местоименисем, наречисем, евĕрлев сăмахĕсем, глаголсем тата союзсем, хыççăмахсем, татăксем. Междометисене вара хăйне уйрăм пай тетпĕр.

Чĕлхери сăмахсем пуплев пайĕсем çине татăклăн ушкăнланманнин сăлтавĕсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ. Çапах та пирĕн шутпа, чи малтан хамăр чĕлхери перекет йĕркипе çыхăннă.

**Синтаксисра** та программăна кĕртмелли çĕнĕлĕхсем пур. Вĕсенчен кирлĕреххи «Предложенин шухăш (е хутшăну) тытăмĕ» текен ыйту. Пуплевре эпир предложение грамматикăшăн мар, пĕр-пĕр шухăша палăртас тĕллевпе йĕркелетпĕр. Шухăша палăртман (урăхла каласан, содержанисĕр) предложени çук,

Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ те хальччен хи пек мар. Подлежащиех акă сказуемăйпа кăна мар, унăн ушкăнĕпе пĕтĕмĕшлĕн çыхăнма пултарать. Сказуемăй та çавнашкалах.

Предложенири сăмахсен çыхăнăвне «член» текен ăнлавпа çыхăнтарса пуплеве эпир пĕлтерĕшсĕр сыпăксем çине пайлама тытăнатпăр. Предложенири сăмахсен çыхăнăвне тĕрĕс палăртни кĕçĕн членсене уйăрнă чухнехи йывăрлăхсенчен те хăтарать.

Программăра пуплеве аталантарас тĕллевпе ирттермелли ĕçсене чылайăшне литература урокĕсенче туса ирттермелле.

## Вĕренӳ компетенцийĕ

Вĕрентӳ тĕллевĕсем ачасем чăваш чĕлхи предмечĕпе мĕн-мĕн пĕлмеллипе (вĕренӳре йĕркеленмелли компетенцисемпе) тачă çыхăннă. Тăван чĕлхене вĕреннĕ май йĕркелемелли **компетенцисем** виççĕ: коммуникаци (е хутшăну) компетенцийĕ, чĕлхе тата лингвистика компетенцийĕ, культуроведени компетенцийĕ.

**Коммуникаци е хутшăну компетенцийĕ** пуплев ĕçĕ-хĕлĕн пур тĕсĕпе (тăнлав, калаçу, çыру, вулав) усă курма вĕрентмеллине пĕлтерет. Çавăн пекех кунта калаçу тата çыру пуплевне тĕрĕс йĕркелесси те, чĕлхе хатĕрĕсемпе тĕрлĕ ситуацие кура тĕллевлĕ тата вырăнлă усă курасси те, харпăр пуплевне, хутшăнури ытти çынсен калаçăвне, вĕсен хутшăнури тĕллевне туйса-сăнаса тăрасси те, калаçăва кирлĕ енне çавăрма пултарасси те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

**Чĕлхе тата лингвистика компетенцийĕ** пуррине çак паллăсем кăтартаççĕ: чĕлхе знак системи тата çынсене хутшăнма кирлĕ хатĕр пулнине пĕлни, чĕлхе тытăмне, вăл улшăнма пултарнине ăнланни; чĕлхе вĕрентĕвĕ мĕн иккенне, ун тĕп пайĕсене тата тĕп ăнлавĕсене пĕлни; чĕлхе факчĕсемпе пулăмĕсене тишкерсе хаклама пултарни; пуплевре усă куракан сăмахсемпе тата грамматика хатĕрĕсемпе ирĕклĕ усă курни; пуплев нормăллă пулнипе пулманнине пĕлни тата нормăсене пăхăнса калаçни-çырни; çырăва орфографипе пунктуаци енчен тĕрĕс тума тăрăшни; лингвистика словарĕсемпе усă курма пултарни.

**Культуроведени компетенцийĕ** пуррине çыннăн çак енĕсем тăрăх пĕлме пулать: тăван чĕлхе наци культурине палăртакан пахалăх пулнине ăнланни, чĕлхере халăхăн аваллăхĕ, шухăшлавĕпе тĕнче курăмĕ (менталитечĕ), йăли-йĕрки çырăнса юлнине курни, чĕлхемĕрĕн хăйне евĕрлĕхне ăша хывни, пуплев этикетне тытса пыни, халăхсем хушшинчи хутшăну уйрăмлăхĕсене шута илсе калаçни; сăмах пĕлтерĕшне наци культури çине таянса ăнлантарни.

## Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕсем

**Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕсем** виçĕ енлĕ пулмалла**:** харкамлăх результачĕсем (шкул ачи хăйĕншĕн тунисем), пур предмета та вĕренме кирлисем, тăван чĕлхепе хăйĕнпе кăна çыхăннă результатсем.

**Харкамлăх (личностные) результачĕсем** шутне акă мĕн-мĕн кĕрет:

1) тăван чĕлхе чăваш халăхĕн наци пурлăхĕ пулнине, Чăваш Республикинче вырăс чĕлхипе тан патшалăх чĕлхи пулнине ăнланни; тăван чĕлхепе ӳлĕмрен кулленхи пурнăçра, суйласа илнĕ профессире уса курма пултарни;

2) чăваш чĕлхин илемлĕхне хаклама пултарни, тăван чĕлхене хисеплени, унпа мăнаçланни; чăваш пуплевĕн нормисене наци культурин пуянлăхĕ шайне лартса сыхласси кашни чăвашшăн пысăк тивĕç тесе йышăнни; пуплеве куллен-кун аталантарма тăрăшни;

3) шухăшпа туйăма палăртма усă куракан сăмахсем, грамматика хатĕрĕсем пуплевре йышлă пулни; ача хăй пуплевне (калаçнине те, çырнине те) сăнаса тивĕçлĕ хак пама пултарни.

**Пур предмета та (метапредметные) вĕренме кирлĕ** результатсем:

1) пуплевĕн мĕн пур тĕсĕпе усă курни:

- сăмахпа каласа е çырса пĕлтернĕ информацие тĕрĕс ăнланни;
- вулавăн тĕрлĕ мелĕпе усă курни;
- тĕрлĕ çĕртен (хаçат-журналтан, Интернетран, радиопа телевиденирен т.ыт.те) килекен материал çине таянса информаци пухма пултарни;
- ку е вăл темăпа çыхăннă материала вуласа е илтсе тупма, ăна пухса, тишкерсе, кирлине суйласа илме пултарни; пухнă информацие сыхлама, улăштарма тата кирлĕ çĕре çитерме пултарни (информаци çăл куçĕ хаçат-журнал, тĕрлĕрен техника хатĕрĕ пулма пултарать);

- пĕччен е ушкăнпа тумалли вĕренӳ ĕçĕн тĕллевне, йĕркине ăнланса илни, ĕç результатне каласа е çырса хаклама пултарни;
- шухăша сăмах вĕççĕн е çырса ирĕклĕ те тĕрĕс уçса пама пултарни;
- тантăшсем умĕнче пĕчĕк е пысăкрах доклад тума хăнăху пурри;

2) вĕренӳре илнĕ тĕрлĕ пĕлӳпе, нумай-нумай хăнăхупа яланхи пурнăçра усă курни; тăван чĕлхене вĕренсе пухнă пĕлӳпе тата хăнăхупа ытти предметсене (тăван мар чĕлхесене, литературăна т.ыт.те) вĕренме усă курни;

3) калаçнă май, пĕр-пĕр ĕç тунă чух е мĕнле те пулин тавлашуллă ыйтăва сӳтсе явнă чух çынсемпе тĕрлĕ çыхăнăва кĕме хăнăху пурри; пĕр-пĕр йĕркепе иртекен хутшăнура е яланхи калаçура наци культуринче çирĕпленнĕ пуплев нормисене пăхăнни.

**Предмета (предметные) вĕреннин** результачĕсем:

1) чăваш чĕлхи чăваш халăх чĕлхи, хамăр республикăра патшалăх чĕлхи (вырăс чĕлхипе пĕрле) пулса тăнине ăнланни; тăван чĕлхепе культура хушшинче тачă çыхăну пуррине пĕлни; чăваш чĕлхи уйрăм çынпа общество пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине ăша хывни;

2) тăван чĕлхене пĕлни чăваш культуришĕн, халăх пуласлăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине, çавăнпа чĕлхене вĕренме тивĕç пуррине ăнланни;

3) пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма пултарни:

*илтнине ăнланни тата вулав хăнăхăвĕ:*

- сăмахпа каласа е çырса пĕлтернине (текст тĕллевне, темине, тĕп тата хушма информацине) кирлĕ пек ăнланни;
- стильпе жанр енчен мĕнле пулнине пăхмасăр текста вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе (çиелтен пăхса тухни, паллашмалла пăхса тухни, вĕренни) усă курни;
- вуланă текста информаци енчен улăштарса çĕнетме (план тума, тезиссем çырма) пултарни; кĕнекепе, хаçат-журналпа ĕçлеме пĕлни;
- словарьсен тĕрлĕ тĕсĕпе, пĕлкĕчсемпе (вăл шутра электрон носителе кĕртнисемпе) усă курма хăнăху пурри;
- стильпе жанр енчен расна текстсене çын вулани тăрăх ăнланни; аудированин тĕрлĕ тĕсне (тулли ăнланни, тĕп содержанине ăнланни, кирлĕ информацие суйласа илни) алла илни;
- пуплев сыпăкĕсене содержани, функци, усă курнă чĕлхе хатĕрĕсем тăрăх танлаштарма пултарни;

*сăмах вĕççĕн калани тата çыру:*

- итленĕ е вуланă текста пĕр-пĕр виçепе кĕскетсе (улăштармасăр, план туса, тезис хатĕрлесе) каласа е çырса пани;
- шухăша сăмахпа каласа тата çырса ирĕклĕн те тĕрĕс уçса пама пултарни; текст тытăмне тĕрĕс тытса пыни (логикăлăх, шухăш юхăмĕн йĕркелĕхĕ, çыхăнулăх пурри, темăпа килĕшсе тăни); çыраканнин пурнăçри пулăмсем çинчен, вулани-илтни çинчен хăй шухăшне калама хăнăху пурри;
- стильпе тĕсне кура хутшăну тĕллевне, лару-тăрăвне шута илсе сăмахпа каласа е çырса ку е вăл йышши текст хайлама пултарни; хутшăну задачисене кура ку е вăл чĕлхе хатĕрĕ суйласа илсе пĕр-пĕр жанр законĕсем тăрăх текст (калав, хаклав, çыру, расписка, шантару, заявлени) тума пултани;
- монологпа диалог тĕсĕсене пĕлни; ачан хăйĕн тантăшĕсем умĕнче кĕске хыпар вуласа пама, доклад тума хăнăху пурри;
- пуплевре литература чĕлхин орфоэпи, лексика, грамматика нормисене тытса пыни; сăмахсемпе пĕлсе усă курни; çырура орфографипе пунктуаци правилисене пăхăнни;
- çынсемпе калаçнă чух пуплев этикетне шута илни; чĕлхе хатĕрĕсем вырăнне пуплев хатĕрĕсемпе (мимикăпа, алă хусканăвĕпе) вырăнлă усă курни;
- кашни хăйĕн пуплевне сăнаса тĕрĕслесе тăма, содержани, чĕлхе енчен, хутшăну тĕллевне пурнăçлас тухăçлăхĕ енчен хаклама пултарни; грамматикăпа пуплев

йăнăшĕсене тупма, тӳрлетме пултарни; харпăр хăй тунă текста лайăхлатма тата редакцилеме вăй çитерни;

4) чăваш чĕлхине тĕпчекен ăслăлăхăн никĕсне ăша хывни; чĕлхен шайĕсемпе единицисем хушшинчи çыхăнусене ăнланни;

5) чĕлхе ăслăлăхĕн тĕп ăнлавĕсене алла илни: чĕлхе вĕрентĕвĕ тата унăн тĕп пайĕсем; чĕлхе тата пуплев, пуплевпе усă курса хутшăнни, калаçу тата çыру; монолог тата диалог; пуплев ситуацийĕ; пуплевĕн функципе шухăшран килекен тĕсĕсем (калав, сăнлав, ăслав); текст; чĕлхе единицисем, вĕсен паллисем тата пуплевре усă курнă чухнехи уйрăмлăхĕсем;

6) сăмаха фонетика, тытăмĕ, пулăвĕ, лексика енчен тишкерме пĕлни, сăмах майлашăвĕпе предложение синтаксис енчен тишкерни; текста ун содержанийĕ, тĕп паллисемпе тытăмĕ енчен, пуплевĕн функцире палăракан тĕсĕсене кура, чĕлхе уйрăмлăхĕсене пăхса, илемлĕх хатĕрĕсене шута илсе тишкерни;

7) тăван чĕлхен эстетика функцине ăнланса илни, илемлĕ литература тексчĕсене тишкернĕ май пуплев единицин илемлĕхне курма пĕлни.

Чăваш чĕлхи предмечĕн ачасен хутшăну, чĕлхепе лингвистика тата культуроведени компетенцийĕсене аталантарас тĕллевĕсем пуррине тĕслĕх программа тытăмĕнче те шута илнĕ. Программа содержанийĕнче виçĕ сий пур:

*коммуникаци (е хутшăну) компетенцине* аталантарма май паракан содержани;

*чĕлхе тата лингвистика компетенцине* аталантарма май паракан содержани;

*культуроведени компетенцине* аталантарма май паракан содержани.

Вĕренӳ содержанийĕн кашни енĕ практикăра пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса пырать. Ачасем теори вĕреннĕ май мĕнле те пулин практика хăнăхăвĕ туянма тивĕç. Унсăр пуçне коммуникаципе культуроведени компетенцине аталантарма ятарлă вăхăт та уйăрмалла.

Вĕренекенсенчен чылайăшĕ 5–6 классенчех (тепĕр чух маларах та) сăвă-калав çырса хăйĕн пултарулăхне тĕрĕслеме тытăнать. Çак пархатарлă туртăма асăрхаса малалла аталантарса пырасси учителĕн тивĕçĕ шутланмалла. Сăмах пуянлăхне ӳстересси, сăмахсен тӳрĕ е куçăмлă пĕлтерĕшĕсене уйăрма хăнăхтарасси, ытарлăхпа сăнарлăх туйăмне аталантарасси тивĕçлĕ вырăнта пулмалла.

Вĕренӳ результачĕ, паллах, программа содержанийĕнчен тата ăна мĕнле йĕркепе вĕрентнинчен килет. Чĕлхе программине çырнă май авторсем ачасем кулленхи пурнăçра тата вĕренӳре чăвашла тĕрĕс калаçса-çырса хутшăнма пĕлни чи пĕлтерĕшлĕ результат пулмаллине шута илнĕ. Ку вара вĕренӳ вăхăчĕпе те, ытти предметсен ретĕнче чăваш чĕлхи мĕнле вырăн йышăннипе те тачă çыхăннă.

## Вĕренӳ результачĕсем

### 5-мĕш класра вĕреннĕ ачасен мĕн-мĕн пĕлмелле тата пултармалла:

1) чăваш чĕлхи чăваш халăх чĕлхи, хамăр республикăра патшалăх чĕлхи (вырăс чĕлхипе пĕрле) пулса тăнине ăнланни; тăван чĕлхепе культура хушшинче тачă çыхăну пуррине пĕлни; чăваш чĕлхи уйрăм çынпа общество пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине ăша хывни;

2) тăван чĕлхене пĕлни чăваш культуришĕн, халăх пуласлăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине, çавăнпа чĕлхене вĕренме тивĕç пуррине ăнланни;

3) пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма пултарни:

*илтнине ăнланни тата вулав хăнăхăвĕ:*

- сăмахпа каласа е çырса пĕлтернине (текст тĕллевне, темине, тĕп тата хушма информацине) кирлĕ пек ăнланни;
- стильпе жанр енчен мĕнле пулнине пăхмасăр текста вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе (çиелтен пăхса тухни, паллашмалла пăхса тухни, вĕренни) усă курни;
- вуланă текста информаци енчен улăштарса çĕнетме (план тума, тезиссем çырма) пултарни; кĕнекепе, хаçат-журналпа ĕçлеме пĕлни;
- словарьсен тĕрлĕ тĕсĕпе, пĕлкĕчсемпе (вăл шутра электрон носителе кĕртнисемпе) усă курма хăнăху пурри;
- стильпе жанр енчен расна текстсене çын вулани тăрăх ăнланни; аудированин тĕрлĕ тĕсне (тулли ăнланни, тĕп содержанине ăнланни, кирлĕ информацие суйласа илни) алла илни;
- пуплев сыпăкĕсене содержани, функци, усă курнă чĕлхе хатĕрĕсем тăрăх танлаштарма пултарни;

*сăмах вĕççĕн калани тата çыру:*

- итленĕ е вуланă текста пĕр-пĕр виçепе кĕскетсе (улăштармасăр, план туса, тезис хатĕрлесе) каласа е çырса пани;
- шухăша сăмахпа каласа тата çырса ирĕклĕн те тĕрĕс уçса пама пултарни; текст тытăмне тĕрĕс тытса пыни (логикăлăх, шухăш юхăмĕн йĕркелĕхĕ, çыхăнулăх пурри, темăпа килĕшсе тăни); çыраканнин пурнăçри пулăмсем çинчен, вулани-илтни çинчен хăй шухăшне калама хăнăху пурри;
- стильпе тĕсне кура хутшăну тĕллевне, лару-тăрăвне шута илсе сăмахпа каласа е çырса ку е вăл йышши текст хайлама пултарни; хутшăну задачисене кура ку е вăл чĕлхе хатĕрĕ суйласа илсе пĕр-пĕр жанр законĕсем тăрăх текст (калав, хаклав, çыру, расписка, шантару, заявлени) тума пултани;
- монологпа диалог тĕсĕсене пĕлни; ачан хăйĕн тантăшĕсем умĕнче кĕске хыпар вуласа пама, доклад тума хăнăху пурри;
- пуплевре литература чĕлхин орфоэпи, лексика, грамматика нормисене тытса пыни; сăмахсемпе пĕлсе усă курни; çырура орфографипе пунктуаци правилисене пăхăнни;
- çынсемпе калаçнă чух пуплев этикетне шута илни; чĕлхе хатĕрĕсем вырăнне пуплев хатĕрĕсемпе (мимикăпа, алă хусканăвĕпе) вырăнлă усă курни;
- кашни хăйĕн пуплевне сăнаса тĕрĕслесе тăма, содержани, чĕлхе енчен, хутшăну тĕллевне пурнăçлас тухăçлăхĕ енчен хаклама пултарни; грамматикăпа пуплев йăнăшĕсене тупма, тӳрлетме пултарни; харпăр хăй тунă текста лайăхлатма тата редакцилеме вăй çитерни;

4) чăваш чĕлхине тĕпчекен ăслăлăхăн никĕсне ăша хывни; чĕлхен шайĕсемпе единицисем хушшинчи çыхăнусене ăнланни;

5) чĕлхе ăслăлăхĕн тĕп ăнлавĕсене алла илни: чĕлхе вĕрентĕвĕ тата унăн тĕп пайĕсем; чĕлхе тата пуплев, пуплевпе усă курса хутшăнни, калаçу тата çыру; монолог тата диалог; пуплев ситуацийĕ; пуплевĕн функципе шухăшран килекен тĕсĕсем (калав, сăнлав, ăслав); текст; чĕлхе единицисем, вĕсен паллисем тата пуплевре усă курнă чухнехи уйрăмлăхĕсем;

6) сăмаха фонетика, тытăмĕ, пулăвĕ, лексика енчен тишкерме пĕлни, сăмах майлашăвĕпе предложение синтаксис енчен тишкерни; текста ун содержанийĕ, тĕп

паллисемпе тытăмĕ енчен, пуплевĕн функцире палăракан тĕсĕсене кура, чĕлхе уйрăмлăхĕсене пăхса, илемлĕх хатĕрĕсене шута илсе тишкерни;

7) тăван чĕлхен эстетика функцине ăнланса илни, илемлĕ литература тексчĕсене тишкернĕ май пуплев единицин илемлĕхне курма пĕлни.

**Вĕренӳ результачĕсем**

**6-мĕш класра вĕреннĕ ачасен мĕн-мĕн пĕлмелле тата пултармалла:**

-сайра тĕл пулакан сăмахсен пĕлтерĕшĕсемпе словарь тăрăх паллашса вĕсене пуплеве кĕртсе пыма;

-вĕреннĕ пуплев пайĕсенчи иккĕмĕшле сăмахсем епле пулнине ăнлантарма, тухăçлă тата тухăççăр аффикссемпе усă курма;

-вĕреннĕ пуплев пайĕсен формисемпе пуплевре тĕрĕс усă курма;

- тĕрлĕ словарьсемпе усă курма;

- текст планне тума, текстăн темипе тĕп шухăшне палăртма;

- текст содержанине кĕскен тата тĕплĕн каласа пама;

- таврари япаласене е чĕр чунсене сăнласа пама (çырса е сăмах вĕççĕн), пурнăçри пулăмсем е ĕç-пуç çинчен мĕн шутланине ăслама;

- шухăша йĕркипе, вĕçе-вĕçĕн каласа е çырса пама, пĕр-пĕр сăмахпа вĕçĕмсĕр усă курассинчен хăтăлма.

-синонимлă формăсемпе тĕрĕс усă курма;

-вуланă хайлавăн тĕп шухăшне тупма;

-калаçăва е çырăва калав, сăнлав е ăслав кĕввипе килĕштерсе йĕркелеме.

**Вĕренӳ результачĕсем**

**7 класра вĕреннĕ ачасен çаксене пĕлмелле тата пултармалла:**

- хăй çинчен, тăван çемье, ялĕ, шкулĕ çинчен кĕскен те анлăраххăн та çыхăнуллăн каласа пама пултармалла;

- çавнашкалах вуланӑ пӗр-пӗр хайлав çинчен, ӑçта та пулин кайса курни çинчен те ирӗклӗн каласа пама пӗлмелле;

- сӑпайлӑ калаçӑва тирпейсӗрринчен, кӑмӑллине кӑмӑлсӑрринчен уйӑрма пӗлмелле;

- чӗлхери сӑмахсене май пур таран пуплев пайӗсем çине уйӑрма, пуплев пайӗсен уйрӑмлӑхӗсене кӑтартма пултармалла;

- пуплев пайӗсен тӗрлӗ формисемпе вырӑнлӑ усӑ курмалла;

- пуплев этикетне алла илмелле (сывлӑх сунма, тав тума, сыв пуллашма, пулӑшу ыйтма е чӗнме, паллашма т.ыт.)

Çапах та вӗрентекенсен çакна асра тытмалла: чӗлхепе хутшӑнура (калаçура е çырура) кирлӗ пек вӗрентеймесен унӑн тытӑмӗ çинчен калаçнин усси çукпа пӗрех. Чӗлхе тытӑмне пӗлнине пуплевре палӑртмалла. Ачан калаçӑвӗпе çырӑвӗ çулсеренех пуянланса, якалса, тасалса пыни кӑна унӑн чӗлхе пӗлӗвӗ таранланса пынине кӑтартаь.

## Чӑваш чӗлхи предмечӗн содержанийӗ

### *Коммуникаци (е хутшӑну) компетенцине аталантарма май паракан содержани*

### 5-мӗш класс (105 сехет)

### Пуплев тата пуплевлӗ хутшӑну (18 сехет)

1. Пуплев тата пуплевлӗ хутшӑну. Пуплев ситуацийӗ. Калаçупа çыру. Монолог пуплев, диалог пуплев. Монолог, унӑн тӗсӗсем. Диалог, унӑн тӗсӗсем.
2. Калаçупа çырӑвӑн уйрӑмлӑхӗсене асӑрхасси; калаçу тата çыру тӗсӗсене тишкересси. Диалогпа монолога уйӑрасси. Монологпа диалог тӗсӗсемпе усӑ курасси. Пуплев ситуацине кура калаканнин тӗллевӗсемпе сӑлтавӗсем расна пулнине ӑнланасси. Пӗр-пӗринпе типлӑ лару-тӑрура ку е вӑл йӗркене пӑхӑнса е пӑхӑнмасӑр хутшӑннӑ май харпӑр хӑйне кирлӗ пек тытма хӑнӑхасси.

**Пуплев ӗҫ-хӗлӗ**

1. Пуплев ӗҫӗ-хӗлӗн тӗсӗсем: вулав, аудировани (итлев), калав, ҫыру.

Вулав, аудировани, калав тата ҫыру культури.

2. Пуплев ӗҫӗ-хӗлӗн тӗп тӗсӗсене алла илни.

Текстӑн тӗп тата хушма содержанине харпӑр хӑй тата ҫын вулани тӑрӑх кирлӗ пек ӑнланасси. Харпӑр хӑй е ҫын вуланӑ текстӑн содержанине кӗскен тата туллин каласси тата ҫырасси. Ҫиелтен пӑхса тухса, паллашу шучӗпе тата тӗпчевлӗ вулама, вӗренӳ кӗнекипе тата ытти информаци ҫӑл куҫӗсемпе ӗҫлесси. Аудированин тӗрлӗ тӗсӗпе усӑ курасси. Итленӗ тата вуланӑ текстӑн содержанине изложенире (тӗплӗн, кӗскен тата суйлавлӑ) уҫса парасси.

Хутшӑну тӗллевӗсемпе енӗсене тата лару-тӑрӑвне кура монологсем (каласа тата ҫырса) тата диалогсем (сӑмахпа каласа) тӑвасси. Пӗр-пӗр темӑпа ҫыхӑннӑ материала суйласа илсе ушкӑнласси, тишкересси, тӗрлӗ ҫӗрте тупнӑ материалӑн информацине анализласси тата кирлӗ пек улӑштарасси.

**Текст**

1. Текст ӑнлав, текстӑн тӗп паллисем (пайланулӑх, шухӑш пӗр пӗтӗмлӗхӗ, ҫыхӑнулӑх). Тема, текстӑн тӗп шухӑшӗ. Текстӑн вак теми (микротеми).

Предложенисемпе текст пайӗсене пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтаракан мелсем. Абзац – текста композиципе стиль енчен ҫыхнтаркан мел.

Пуплевӗн функципе шухӑшран килекен тӗсӗсем: сӑнлав, калав, ӑслав. Текст тытӑмӗ. План тата тезис – информаци енчен ҫӗнетсе улӑштарнӑ текстсем.

2. Текста тема, тӗп шухӑшӗ, тытӑмӗ, пуплевӗн функципе шухӑш тӗсӗ тӑрӑх тишкересси. Текста шухӑш тӑрӑх пайласси, план тӑвасси тата тезиссем хатӗрлесси. Предложенисем пӗр пӗринпе мӗнле мелпе тата хатӗрпе ҫыхӑннине тупасси. Текстӑн чӗлхе уйрӑмлӑхӗсене тишкересси. Чӗлхе хатӗрӗсене хутшӑну тӗллевне, темине, тӗп шухӑшне тата лару-тӑрӑвне кура суйласа илесси. Тӗсне, стильне тата жанрне кура тӗрлӗ текст тӑвасси. Текст тытӑмӗн нормисене (логикӑлӑх, шухӑшсен йӗркелӗхӗ, ҫыхӑнулӑхӗ, темӑпа тӳр килни т.ыт.те) тытса пырасси. Сӑмахпа каласа е ҫырса тунӑ текста хакласси тата редакцилесси.

**Чӗлхен функциренкилекен тӗсӗсем**

1. Чӗлхен функциренкилекен тӗсӗсем: калаҫу; функципе ҫыхӑннӑ стильсем: наука стилӗ, публицистика стилӗ, ӗҫлӗ стиль; илемлӗ литература чӗлхи.

Стильтен килекен жанрсем: наука стилӗ – пахалани, тухса калани, доклад; публицистика стилӗ – тухса калани, интервью; ӗҫлӗ стиль – расписка, шантару, заявлени; яланхи калаҫу – калав, калаҫу.

2. Текст чӗлхен функциренкилекен пӗр-пӗр тӗсӗ пулнине палӑртасси. Пуплевӗн тӗрлӗ стильне, жанрне тата тӗсне кура ку е вӑл текст (тезис, хаклав, ҫыру, расписка, шантару, заявлени; калав, сӑнлав, ӑслав) ҫырасси. Ҫын (тантӑшсем) умӗнче пӗчӗк хыпар, доклад тӑвасси.

***Чӗлхе тата лингвистика (чӗлхе вӗрентӗвӗн) компетенцине аталантарма май паракан содержани***

**Чӗлхе мӗн вӑл?**

1. Чӑваш чӗлхи – чӑваш халӑхӗн чӗлхи, Чӑваш Республикин патшалӑх чӗлхисенчен пӗри. Чӑваш чӗлхин ытти чӗлхе йышӗнчи вырӑнӗ.

Чӑваш чӗлхи аталанакан чӗлхе. Хальхи чӑваш чӗлхин хутшӑну тӑвассипе ҫыхӑннӑ формисем: литература чӗлхи, диалектсем, ансат пуплев.

Чӑваш чӗлхи – илемлӗ литература чӗлхи. Чӑваш чӗлхин сӑнарлӑх хатӗрӗсем.

Лингвистика – чӗлхе тӗпчекен ӑслӑлӑх. Чӗлхе вӗрентӗвӗн тӗп пайӗсем.

Чӑваш чӗлхин паллӑ тӗпчевҫисем.

2. Хутшӑну хӑнӑхӑвӗ пурнӑҫра пысӑк вырӑн йышӑннине ӑша хывасси, чӑваш чӗлхин общество пурнӑҫӗнчи тата патшалӑх ӗҫӗнчи пӗлтерӗшне ӑнланасси.

Литература чӗлхипе диалектсем тата ансат пуплев хушшинче уйрӑмлӑхсем пуррине чухласси. Чӑваш чӗлхин илемлӗхне, перекетлӗхне, сӑнарлӑх вӑйне ӑнланасси. Илемлӗ литература тексчӗсенче чӑваш чӗлхин сӑнарлӑх мелӗсемпе епле усӑ курнине сӑнасси.

**Фонетикӑпа орфоэпи. Графикӑпа орфографии (42 сехет)**

1. Фонетика чӗлхе вӗрентӗвӗн пайӗ пулни.

Сасӑ чӗлхе единици пулни. Уҫӑ сасӑсем, вӗсен мӑшӑрлӑхӗ (хытӑ тата ҫемҫе уҫӑ сасӑсем). Вырӑсларан ҫырупа йышӑннӑ сӑмахсенчи [о] уҫӑ сасӑ.

Уҫӑ сасӑсене палӑртакан сас паллисем **(а, ӑ, е, ӗ, у, ӳ, ы, и, э).**

**Ю, я** сас паллисем, вӗсем икӗ сасса *(йурӑ, йухать)* тата умӗнхи хупӑ сас паллине ҫемҫетсе вуламаллине *(выля, Люся)* палӑртни.

**Е** сас палли икӗ сасса *(йешӗл, йепле)* тата [э] сасса палӑртни *(этем, элек).* **Э** тата **е** сас паллисен ҫырури вырӑнӗ.

Чӑваш чӗлхинчи [й] хупӑ сасӑ ытти уҫӑ сасӑсем умӗн те тӑма пултарни: *йӑмра, йӗлтӗр, йывӑр, йӳҫӗ, йӳнӗ, кӗсйи.*

Чӑваш сӑмахӗсенче икӗ уҫӑ сасӑ юнашар тӑма пултарайманни.

Вырӑсларан йышӑнакан сӑмахсенчи уҫӑ сасӑсен юнашарлӑхӗ *(аэропорт, аут, поэт, Дуайт).*

Сӑмахри уҫӑ сасӑсен килӗшӗвӗ (сингармонизм). Ку килӗшӗве пӑхӑнман тӗслӗхсем *(тӑри, кавле, куклен, парне* т.ыт.те).

Сӑмахри аффикссем ытларах чух сингармонизма пӑхӑнни *(ҫурт-ра, пӳрт-ре, пур-лӑх, ҫитмен-лӗх, лар-у, кӗт-ӳ).* Сингармонизма пӑхӑнман аффикссем: *юлташ-сем, ял-ти, юрӑ – юрри, кай-иччен* т.ыт.те.

Вырӑсларан ҫырупа йышӑнакан сӑмахсем сингармонизма пӑхӑнманни *(орден, тетрадь, депо).* Вырӑсларан йышӑнакан сӑмахсем ҫумне хушӑнакан аффикссен хытӑлӑхӗпе ҫемҫелӗхӗ.

Хупӑ сасӑсем. Ялан янӑравлӑ [**в, й, л, ль, м, , нь, р**] тата [**к, п, т, х, с, ҫ, ч, ш** ] шавлӑ хупӑ сасӑсем**.**

Хупӑ сасӑсен хытӑлӑхӗпе ҫемҫелӗхӗ: уҫӑ сасӑсенчен килекен ҫемҫелӗх *(пилеш, кӗлет, тӗлӗк),* уҫӑ сасӑсенчен килмен ҫемҫелӗх *(халь, выльӑх, супӑнь, курать, юрать).*

Хытӑлӑхпа ҫемҫелӗх йӗркине пӑхӑнман [**с, ҫ, ч, й**] хупӑ сасӑсем, вӗсем хытӑ уҫӑ сасӑпа та, ҫемҫе уҫӑ сасӑпа та юнашар тӑма пултарни: *сарӑ – симӗс, ҫурла – ҫӳхе, чарӑн – чӗрӗк, йурӑ – йӳнӗ.*

Шавлӑ хупӑ сасӑсем янӑраса е янӑрамасӑр илтӗнни, вӗсене ҫырура палӑртасси.

Хупӑ сасӑсем вӑрӑммӑн илтӗнни (мӑшӑрланни), ӑна ҫырура палӑртасси *(кулӑ – кулли, ырӑ – ырри, ахаль – ахальлӗн* т.ыт.).

Вырӑс чӗлхинчен ҫырупа йышӑнакан сӑмахсенчи хупӑ сасӑсен хытӑлӑхӗпе ҫемҫелӗхӗ, вӗсене ҫырура палӑртасси.

*Промышленность – промышленноҫӑн, повесть – повеҫре* йышши сӑмахсене ҫырасси.

Пӗрешкел икӗ сасӑпа вӗҫленекен сӑмахсене ҫырасси *(металл – металӑн, металшӑн, класс – класра, класӑн* т.ыт.те).

Вырӑсларан ҫырупа йышӑнакан сӑмахсенче **б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, р, э** сас паллисене ҫырасси.

Уҫӑ сасӑсемпе хупӑ сасӑсем сӑмахран тухса ӳкни: *эпӗ – эп, эсӗ – эс, вунӑ – вун, пурӑн – пурнӑҫ, тӑхлачӑ – тӑхлач, пар – патӑм, панӑ; тӑр – тӑтӑм, тӑнӑ.*

Сасӑсен ылмашӑвӗ *(хут – хучӗ, тетрадь – тетрачӗ, пӑру –пӑрӑвӗ*).

Чӑваш чӗлхинчи сасӑсемпе вырӑс чӗлхинчи сасӑсем, вӗсен пӗрешкеллӗхӗпе уйрӑмлӑхӗсем.

Ударени (пусӑм). Чӑваш сӑмахӗсенчи ударени йӗрки. Вырӑс чӗлхинчен йышӑнакан сӑмахсенчи ударени.

2. Орфографипе орфоэпи нормисене ҫирӗплетессипе ӗҫлесси. [**Ӑ, ӗ, ӳ, ҫ**] сасӑсене тӗрӗс калама вӗрентесси. Хупӑ сасӑсен ҫемҫелӗхне тӑван сӑмахсенче тата вырӑс чӗлхинчен

йышӑнакан сӑмахсенче ҫырура тӗрӗс палӑртасси. Шавлӑ хупӑ сасӑсен янравлӑхӗпе янравсӑрлӑхне ҫырура тӗрӗс палӑртасси. **Э** тата **е** сас паллисемпе тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси. Хӑнӑхусене ҫирӗплетесси. Сӑмахсене тӗрӗс ударенипе калама хӑнӑхтарасси.

Орфографи словарӗпе тата правилӑсемпе усӑ курма хӑнӑхтарасси.

Алфавита пӑхмасӑр калама вӗрентесси. Сӑмахсене алфавитпа ҫырма вӗрентесси.

**Лексика (27 сехет)**

1. Лексика – чӗлхен мӗн пур сӑмахӗн пуххи. Лексика пурнӑҫри улшӑнусемпе тачӑ ҫыхӑнни. Кивелнӗ е кивелсе пыракан сӑмахсем: *кӳнтелен «свидетель», чуптар* (лаша тӗсӗ), *шупӑр, йӗлен* т.ыт. Ҫӗнӗ сӑмахсем: *ентешлӗх* (пӗр енчисем), *юлташлӑх, спонсор, фирма, слайд, ипотека* т.ыт.

Сӑмах пӗлтерӗшӗ. Нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем. Сӑмахсен тӳрӗ тата куҫӑмлӑ пӗлтерӗшӗсем.

Ютран йышӑннӑ сӑмахсем: араб е перс сӑмахӗсем, мари сӑмахӗсем. Вырӑссенчен йышӑннӑ сӑмахсем: калаҫупа йышӑннисем *(витре, пӗремӗк, пӗрене, пӑрӑс, кӗрепле, чиркӳ* т.ыт.). Ҫырупа йышӑннисем *(костюм, галстук, пальто, район, область, тетрадь, блокнот, магазин* т.ыт.). Калаҫупа тата ҫырупа кӗнӗ сӑмахсене ҫырасси.

Синонимсем, антонимсем, омонимсем.

Ятарлӑ сӑмахсем (профессионализмсем). Диалект сӑмахӗсем.

Литература нормине пӑхӑнман сӑмахсем *(ан палка, лӑпӑртат, епреме*), киревсӗр сӑмахсем.

2. Калаҫу мӗнле лару-тӑрура (кампа, хӑҫан, ӑҫта) иртнине кура сӑмахсемпе вырӑнлӑ усӑ курма хӑнӑхтарасси *(Хӑна килсен аш пиҫет. Ҫук ҫын укҫи тӑрнан кӑшкӑрать. Ҫук – вӑрҫтарать, пур – култарать* т.ыт.те.). Ваттисен сӑмахӗсемпе, каларӑшсемпе паллаштарасси, вӗсемпе тӗрӗс усӑ курма хӑнӑхтарасси.

Синонимсемпе антонимсене тупма, вӗсемпе пуплеври усӑ курма вӗрентесси.

Тӗрлӗ йышши словарьсемпе (орфографи словарӗпе, синоним словарӗпе, чӑвашла-вырӑсла е вырӑсла-чӑвашла словарьпе) паллаштарасси, вӗсемпе усӑ курма вӗрентесси.

Пӗлтерӗш тӑрӑх сӑмахсене ушкӑнлама хӑнӑхтарасси (тӗслӗхрен, апат-ҫимӗҫ, пахча ҫимӗҫ, ҫи-пуҫ, йывӑҫ, кайӑк-кӗшӗк, тыр-пул ячӗсем), ҫав сӑмахсемпе пуплеври тӗрӗс усӑ курма вӗрентесси (сӑмахран, *чӗкеҫ чӗвӗлтетет, ҫерҫи чӗриклетет, курак краклатать, ҫӑхан кранклатать, куккук авӑтать, карӑш (путене) авӑтать, шӑпчӑк (тӑри, шӑнкӑрчӑ)* юрлать т.ыт.те.

**Сӑмах тытӑмӗпе пулӑвӗ. Орфографи (15 сехет)**

1. Сӑмах тымарӗ. Аффикссем – сӑмах тӑваканнисем тата сӑмаха улӑштараканнисем.

Сӑмаха улӑштаракан аффикссем ҫӗнӗ сӑмах тума пултарни: *каярахпа, тӑхтарахпа, каҫпа, ирпе; ӳлӗмрен, авалтан; пӗрерӗн, виҫшерӗн, кӑмӑллӑн, хаяррӑн, ҫиллессӗн* т.ыт.те.

Мӑшӑр сӑмахсем, вӗсене тӗрӗс ҫырасси.

Икӗ хут калакан сӑмахсене тӗрӗс ҫырасси.

Сӑмах пӗрлешӗвӗн пайӗсем сасӑ енчен улшӑнса пӗрлешнипе пулнӑ сӑмахсем, вӗсене тӗрӗс ҫырасси.

Вырӑс чӗлхинчи хутлӑ сӑмахсен ӗлкипе тунӑ сӑмахсем.

Сӑмах вырӑнӗнче ҫӳрекен пӗрлешӳсем, вӗсен тӗсӗсем, тӗрӗс ҫырасси: ят пӗрлешӳсем *(куҫ харши, пит ҫӑмарти, тур палли, кача пӳрне, ҫӗнӗ ҫын, упа сарри* т.ыт.*);* глагол пӗрлешӳсем *(ырӑ ту, кӑмӑл ту, усал ту, ҫула ҫит, пӗве кӗр, тӑлӑха юл, ҫука юл; такӑнса ӳк, чирлесе ӳк, хӑраса ӳк, ватӑлса кай, ватӑлса ҫит* т.ыт.те*).*

2. Ҫӗнӗ сӑмаха сӑмах форминчен уйӑрма вӗренесси (тӗслӗхрен: *пулӑш – пулӑшать, пулӑшакан, пулӑшни* – сӑмах формисем; *пулӑшу, пулӑшуҫӑ* – ҫӗнӗ сӑмахсем).

Тӑтӑшрах тӗл пулакан аффикссем хушса ҫӗнӗ (иккӗмӗшле) сӑмахсем тӑвасси, вӗсемпе пуплеври усӑ курасси.

Словарьсенче *упа паланӗ, ура хырӑмӗ, шурӑм пуҫ(ӗ), ҫӑл куҫӗ, хӑна килӗ (ҫурчӗ); йӑлана кӗр, ӳте кӗр, татӑлса ан, ҫакӑнса тӑр* евӗр пӗрлешӳсене тупма хӑнӑхасси. Ҫав пӗрлешӳсене пуплеве кӗртесси, калаҫура вӗсене асӑрхама вӗренесси.

Сӑмах пулӑвӗпе ҫыхӑннӑ орфографи хӑнӑхӑвӗсене ҫирӗплетесси *(хӑю – хӑюлӑх, хӑюллӑ; хастар – хастаррӑн; вырт – вырттар, ирт – ирттер* т.ыт.). Сӑмахсене пӗрле, уйрӑм тата дефиспа ҫырмалли правилӑсене ҫирӗплетесси.

**5 класра вӗреннине аса илсе пӗтӗмлетесси (3 сехет)**

**Чӑваш чӗлхи:5-мӗш класс валли**

/ Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф. Брусова-Шупашкар:Чӑваш кӗнеке издательстви, 2014.-239с.

| **Урок №№-сем** | **Раздел ячӗ** | **Урок теми** | **Сехет шучӗ** |
|---|---|---|---|
| 1 | **Пуҫламӑш класра вӗреннине аса илсе ҫирӗплетесси, хушса вӗрентесси.** **Пуплев тата хутшӑну. Пуплев ӗҫӗ-хӗлӗ. Текст. Чӗлхен функцирен килекен тӗсӗсем. 18сехет** | Тӑван чӗлхе пур чух халӑх та пур | **1** |
| 2 | | Сасӑ тата сас палли. Алфавит (1-мӗш параграф). Б, г, д, ж, з, ф, ц, щ, ӳ, ь сас паллисене ҫырасси (2-мӗш параграф) | **1** |
| 3 | | Сӑмах тымарӗ. Аффикссем (3-мӗш параграф) | **1** |
| 4 | | «Кӗрхи кунсем» сӑнлав сочиненийӗ | **1** |

| | | | |
|---|---|---|---|
| **5** | | Пуçламăш классенче вĕреннĕ пуплев пайĕсем (4-мĕш параграф) | **1** |
| **6** | | Предложени, унăн членĕсем. Пĕр йышши членсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси. | **1** |
| **7** | | Ыйтуллă тата ыйтусăр предложенисем Кăшкăруллă предложени (6§) | **1** |
| **8** | | Тĕрĕслев диктанчĕ «Пирĕн ял» | **1** |
| **9** | | Текст. Унăн пайĕсем. Текст пайĕсене çыхăнтармалли мелсем (7-мĕш параграф) | **1** |
| **10** | | Чĕнӳ сăмахĕсем, вĕсене чарăну паллисемпе уйăрасси (8-мĕш парараграф) | **1** |
| **11** | | Текст теми, тĕп шухăшĕ ( 9-мĕш параграф) | **1** |
| **12** | | Хутлă предложени. Союзсăр тата сыпăнуллă хутлă предложенисем (10-мĕш параграф) | **1** |
| **13** | | Хутлă предложени. Союзсăр тата сыпăнуллă хутлă предложенисем (10-мĕш параграф) | **1** |
| **14** | | Текст планĕ (11-мĕш параграф) | **1** |
| **15** | | Изложени («Кайăксен апатланăвĕ») | **1** |
| **16** | | Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем. Диалог (12-мĕш параграф) | **1** |
| **17** | | Тӳрĕ пуплевлĕ предложенисем. Диалог (12-мĕш параграф) | **1** |
| **18** | | Текст тĕсĕсем Сăнлав. Калав. Ăслав. (13-мĕш параграф) | **1** |
| **19** | **Фонетикăпа орфоэпи. Графикăпа орфографи. Пуплев тата хутшăну. Пуплев ĕçĕ-хĕлĕ. Текст. Чĕлхен функцирен килекен тĕсĕсем. Чĕлхе тата культура. 42 сехет** | Алфавит. Вĕреннине аса илни (14-мĕш параграф) | **1** |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | | |
| **20** | | Уçă сасăсем, вĕсен  мăшăрлăхĕ | **1** |
| **21** | | Уçă сасăсем, вĕсен  мăшăрлăхĕ | **1** |
| **22** | | Уçă сасăсене палăртакан сас паллисем (16-мĕш параграф) | **1** |
| **23** | | Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ (17-мĕш параграф) | **1** |
| **24** | | Сăмахри уçă сасăсен килĕшĕвĕ (17-мĕш параграф) | **1** |
| **25** | | Чăваш сăмахĕсенче икĕ уçă сасă юнашар тăма пултарайманни  (18-мĕш параграф) | **1** |
